# Мария Печникова ачасене ыран та чăвашлах вĕрентесшĕн • 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

37(855) №, 2014, авăн, 13

Хакĕ ирĕклĕ 16+


# Чăваш ХĔРАРĂМĔ


Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



Пушкăртри йăхташăмăрсем чăвашла кĕнекесем ыйтаççĕ. 3 стр.

Айхин юлташĕсем Чăваш Еншĕн тунсăхлаççĕ. 4 стр.

Ыйхă çĕтсен кавăн сĕткенĕ ĕçмелле. 8 стр.

Малтанхи упăшка мăшăр тупни савăнтарать çеç. 9 стр.

"Космонавт" хушма ятпа лайăх пĕлеççĕ ăна. 10 стр.

Александр Артемьевăн хайлавĕсенчи сăнарсем выçă пурăнсан та купăс сутман. 11 стр.


*Пуплемен сăмахăн пылакĕ çук,*
*ĕçмен куркан тути çук теççĕ.*
Каларăш.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 13.09 | +20 | +10 | |
| 14.09 | +18 | +13 | |
| 15.09 | +15 | +12 | |
| 16.09 | +12 | + 9 | |
| 17.09 | +10 | + 5 | |
| 18.09 | +10 | + 5 | |
| 19.09 | +12 | + 7 | |



Е.АТАМАНОВА сăн ÿкерчĕкĕ.

4 стр.

# Пахчи-пахчи, улма пахчи...

**Кивĕ калушĕсемпе аттисем йăл кулаççĕ. Чечеклĕ, хĕвел шевлиллĕ шыв пичкисем те савăнăçпа çиçеççĕ. Улма йывăççисен тураттисем çинче – чăпар çунатлă лĕпĕшпе тĕкĕл тура, вир кайăкĕпе ылтăн пыл хурчĕ... Пахча варринче пысăк симĕс пальма мăнаçлăн сарăлса ларать. Вăштăр çилпе чÿхенсе ларакан черчен шупка кăвак шăнкăрав курăкĕ çинчен куçа илме çук. Акă ăçта вăл тĕлĕнтермĕш çăтмах пахчи! Ку çеç-и, йĕри-тавра – куçа йăмăхтаракан вун-вун тĕрлĕ чечек. Кобея, ипонея, наперстянка, агератум, питуни, астрăпа цини... Кил хуçисене çăвĕпех савăнтарса ларнă ырă шăршăллă кĕл чечексем çеç çурăлса пĕтме ĕлкĕрнĕ. Сад пахчинче темиçе тĕрлĕ улмуççипе груша, иçĕм çырли. Арпусĕ те йăран тулли. Ăмăртмалла çитĕннĕ тейĕн, пĕри тепринчен шултрарах. Уçырмара пурăнакан Анатолийпе Регина Матвеевсен пахчинче ку. Пĕр-икĕ çул каялла ывăлĕ Алеша Канаша кайсан пластик кĕленчесенчен ăсталанă пальмăна асăрханă. Килне çитсен хитре йывăçа ашшĕ-амăшне кăтартма ÿкерсех илнĕ. "Эпир те çав кунран пластик кĕленче пуçтарма тытăнтăмăр. Çÿп-çап купи çине пăрахнисене те тиркемесĕрех илсе килтĕмĕр. Çапла майпа пирĕн пахчара та пальма "ÿссе ларчĕ", – каласа кăтартать Регина Ильинична.**

Матвеевсен хĕрĕ Ирина пĕчĕккĕллех ÿкерме юратнă, кайран ялти ÿнер шкулне çÿренĕ. Çапах та çитĕнсен темшĕн художник пулас темен, юрист профессине алла илнĕ. Анчах та ÿкерес ăсталăха, турă панине ниçта та пытараймăн. Халĕ те пушă вăхăт тупăнсанах никам хистемесĕр аллине сăрăпа киçтĕк тытать Ирина. Сад пахчине юмах тĕнчине çавăраканĕ шăпах вăл. "Ашшĕ пекех ылтăн алăлласкер. Юрăхсăра тухнă кăларса пăрахмалли япаласене те илемлетсе çĕнĕрен "чун кĕртет", – тет амăшĕ. Тĕрĕсех калать Регина. Анатолий Евгеньевич ăста платник пулни кайăк вĕçсе тухмалла мар çавăрнă хуралтăсенчен те курăнать.





ХАСТАРРИСЕМ

# *Мария ПЕЧНИКОВА:* «Ыран та чăвашлах вĕрентесчĕ!»

**– Мария Николаевна, 2009-2010 çулсенче тăван чĕлхе вĕрентекенсен форумĕнче пулма тӳр килнĕччĕ, ун чухне Галина Абрамовăпа Алена Ядрицова учительсен тупăшăвне массăллă информаци хатĕрĕсенче çутатнăччĕ. Вулакансене аса илтерни ытлашши пулмĕ: Галина Васильевна "кĕмĕлпе", Алена Андреевна "ылтăнпа" таврăннăччĕ тĕп хуларан. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – эсир виççĕр те Йĕпреç тăрăхĕнчен. Вăрман сывлăшĕ пулăшать-и сире çĕнтерӳ туптамашкăн е шăл çыртса малалла талпăнни-и?**

– Йĕпреç тăрăхĕ вăрманпа пуяннине пурте пĕлеççĕ. Унта сывлăш та уçăрах, пĕлĕчĕ те çутăрах, çыннисем те ăш пиллĕрех пек. Тата эпĕ çакна асăрханă: пирĕн тăрăхрисем ĕçченлĕхĕпе, малалла талпăнас енĕпе те маттуртарах. Пирĕн ял хĕрĕ Ольга Апчева доярка СССР Аслă Канашĕн депутатĕччĕ, Мăн Упакассинчи Социализмла Ĕç Геройĕн Антон Шордеевăн ячĕ республикипех сарăлнăччĕ. Вулакан ăнланатех: шӳтлетĕп, чăваш пур çĕрте те пĕрешкел ĕçчен. Аристофан калашле, ăçта лайăх – унта тăван çĕршыв. Манăн чун Йĕпреç районĕнчи Эйпеçре ирĕклĕрех. Кану çурчĕсене килĕштерместĕп эпĕ. Аттепе анне – Таисия Пикмуловнăпа Николай Иванович Барановсем – ачисене ĕçпе çитĕнтерчĕç, пиçĕхтерчĕç. Уйрăмах анне ял çинче палăратчĕ, ыттисемшĕн тĕслĕхчĕ.

Улăхра ял çыннисем утă çулнине ас тăватăп. Картана ертсе пыраканни, çул уçаканни аннеччĕ. Яланах ăна мала тăрататчĕç. Хăй вара пĕтĕм кĕлеткипе илемлĕн сулăна-сулăна икĕ хăлаç сарлакăш паккус туса пыратчĕ. Аннем тинĕсри пăрçĕмĕрен карапĕн капитанĕ пекех туйăнатчĕ. Вăл – чăн чăваш хĕрарăмĕ. Вăтаелти тĕне кĕмен чăваш Çӳппи Пикмулли хĕрĕ. Эйпеç ялне качча тухсан çеç Христос тĕнне йышăннă. "Таиçпе /аннене çапла чĕннĕ/ ăмăртса çулма çăмăл мар", – тетчĕç ялта. Нумай вăхăт фермăра ĕçлерĕ. 40 литр кĕрекен сĕт бидонĕсене харăсах иккĕ çĕклесе утатчĕ. Аттен аллиури çыпăçуллăччĕ. Вăл тума пĕлмен ĕç пулман. Хăй вăхăтĕнче конюхра, склад пуçлăхĕнче ĕçлерĕ. Нумай вăхăт Калинин ячĕллĕ хуçалăхăн юсав ушкăнне ертсе пычĕ. Кĕнеке, хаçат-журнал юратнăран ачисене вулама-çырма ир вĕрентрĕ. Шкула кайиччен нех кĕнеке шĕкĕлчеме хăнăхрăм. "Пионер сасси", "Коммунизм ялавĕ", "Çĕнтерӳшĕн" хаçатсене, "Ялав", "Тăван Атăл" журналсене юлашки сас палличченех вуланă темелле. Ĕçе тĕплĕн тăвасси аннерен, ăс-хакăлĕпе шухăшлавĕ – аттерен. Шкулта пур предмета та çăмăллăнах парăнтарнă. Математикăпа физика, химипе биологи, чĕлхесемпе литература ытларах кăмăла каятчĕç. Шăла çыртса малалла талпăнмасан шурлăхра путма та пулать.

**– Мускаври конкурсран çĕнтерӳпе таврăннăранпа 2 çул иртсе кайрĕ. Урам тăрăх утса пынă чухне "Мария Николаевна пырать" текенсен йышĕ ӳсрĕ-и е чакрĕ-и? Автограф ыйтакансем те хыçалтан чупаççĕ пулĕ. Эпĕ ас тăвасса, унта Лăпкă океан хĕрринчи нанаецсем, Камчаткăри корякcем, Çĕпĕрти якутсемпе тувинецсем, Кавказри осетинецсем, чеченсем, паллах, Атăл тăрăхĕнчи мăкшăсемпе марисем хастар хутшăнаканччĕ. Камсемпе туслашрăр? Хăш халăх педагогĕн опычĕпе хăвăр ĕçре усă курма пултартăр?**

– Шӳтшĕн тавах. Кашниех хăйĕн тăрăхĕнче ырă ят çĕнсе илнĕ. Анат Чаллăри 17-мĕш вăтам шкулта тутар чĕлхипе литературине вĕрентекен Р.Латыпов уйрăмах кăмăла кайрĕ. Мордва Республикинчи Ардатов районĕнче Баев вăтам шкулĕнче ирçе чĕлхине вĕрентекен Н.Бояркинăран та вĕренмелли сахал мар. Компьютерпа усă курса ачасен пуплевне аталантармалли паха урок пама пултарчĕ. Камчатка крайĕнчи Анавгай вăтам шкулĕнче эвенк чĕлхине вĕрентекен М.Тарасова юмахсене тишкернĕ чухне пукане театрĕн элеменчĕсемпе усă курни килĕшрĕ. Унсăр пуçне 5-мĕш ăсталăх класне чăваш чĕлхине вĕрентекен 2 педагог хутшăнни маншăн пĕчĕк сенсаци евĕрех пулчĕ. Яковлев, Ивановпа Çеçпĕл аталантарнă чĕлхе илемне Чĕмпĕрти 55-мĕш шкул вĕрентекенĕпе Светлана Марышевăпа пĕрле уçма тăрăшрăмăр.

**– Туслă çыхăну йĕркеленчĕ пулĕ?**

– Унсăр мар ĕнтĕ. Нумайăшĕнпе адрессемпе ылмашăнтăмăр. Кабардин-Балкар Республикинчен пынă Д.Глашевăпа пĕр кунтах çуралнă иккен. Санкт-Петербургри 13-мĕш вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Н.Любавская, тува чĕлхине вĕрентекен А.Байыр-оол, авар чĕлхин специалисчĕ Г.Магомедова... Пурне те ăçтан асăнса пĕтерĕн.

**– Паянхи тĕллевсем?**

– Ачасене республика историйĕпе культури урлă чăваш чĕлхипе таса та илемлĕ калаçма вĕрентесси. Çавна май ĕлĕкхипе паянхи, халăх улăпĕсемпе паллă вырăнсем, ялпа хула пурнăçĕнчи çитĕнӳсем яр уççăн курăнччăр. Уроксенче халăхсен хутшăнăвне мала кăларма тăрăшатăп. Тĕслĕхрен, Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕпе синкерлĕ шăпи вырăс литературинче тарăн йĕр хăварнă А.Солженицынпа В.Шаламов прозаиксенни пек: çĕр-шыв пуласлăхĕшĕн çунни, çав вăхăтрах ГУЛАГ лагерĕсенче тертленни. Тĕллевĕм, каларăм-çке, ачасене чăваш чĕлхи урлă Раççее, Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси. Тата ирхине вăрансан "ыран та ачасене чăвашлах вĕрентесчĕ" тесчĕ.

**– Эсир – кĕнеке авторĕ. Мария Печникова шкул ĕçĕпе кăна лăпланса ларать тесен тĕрĕсех мар паллах. Пултарулăха мĕнле аталантарса пыратăр?**

– Чăваш чĕлхипе иртекен конкурссене сăнасах тăратăп. Чылай чухне эссе жанрпа çырнă хайлав ыйтаççĕ. Пытармастăп: юлашки тапхăрта ăна ытларах та хисеплеме пуçларăм пулмалла. Эссере илемлĕ литература палăрăмĕ те нумай, çав вăхăтрах журналистикăри очерк мелĕсемпе те усă курмалла. Унтах факт та пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Пушă вăхăтра эссе çырма хăтланатăп. Ун пек опыт пур. Пĕр-иккĕшĕ республика пичетĕнче те кун çути курчĕ.

**– "Педагогикăри пысăк ăсталăхшăн" номинацире Раççей шайĕнче çĕнтернĕ педагогпа вĕренекенсен хушшинчи çыхăнусем еплерех?**

– Шкулти кашни класс вĕренекенне юрататăп. Литература пурнăçри йывăрлăхсене чăтăмлăн тӳссе ирттерме вĕрентет. Ачасемпе пĕрле хайлавсене тепĕр хут вуланă хыççăн чĕре çăмăллăнах тапма пуçлать. Урокра час-часах тавлашусем сиксе тухаççĕ. Ку мана савăнтарать çеç. Ан тив, ачасем тупăшчăр, шухăшлаччăр. Маншăн ачасен юратăвĕпе хисепĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ!

**– Сирĕн тĕп тыл – мăшăрăр, республикипех паллă меслетçĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ Олег Печников. Чăваш чĕлхине вĕрентекенсем Олег Ивановича нумай кĕнеке авторĕ пек пĕлеççĕ. Вăл çамрăк чухнех "Вутчуль" театрта вылянине ас тăватăп.**

– Мăшăрăм – хам пекех педагог. Артист пултарулăхĕ кашни учительтех тĕвĕленнĕ. Çавăнпа аса илтерем: чăвашсем лашине мухтакан çуран çӳренĕ тетчĕç-и-ха... Кашни халăхăн хăйĕн ахахĕ, хăйĕн мерченĕ.

**– Халăх сурсан кăна кӳлĕ пулнине мĕн ачаран пĕлетпĕр. Халĕ эсир чăваш чĕлхине вĕрентекен учительсен хушшинче – сумлисенчен пĕри. Çапах сирĕн те туссем, вĕрентекенсем, ĕçре тĕрев паракансем пур. Камсен умĕнче ятран каласах пуç таяс килет?**

– Тĕрĕсех, пысăк лава пĕччен туртаймăн. Шкул директорĕ И.Васильева яланах йывăр вăхăтра алă пама хатĕр. Ираида Васильевна администратор кăна мар, шанчăклă юлташ та. Кĕнеке çырас ĕçре Шупашкарти 59-мĕш вăтам шкулти Г.Абрамовăпа канашлатăп, Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкулти А.Ядрицовăпа туслă çыхăну тытатпăр.

**– Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн Раççей телекуравĕ кашнинчех педагогăн чысĕ, кăмăл-сипечĕ çинчен аса илтерет. Иртнĕ эрнере кăна-ха Пĕрремĕш каналпа Андрей Малаховăн "Пусть говорят" кăларăмĕнче çарамасланнă учителĕн сăн ӳкерчĕкĕсене Интернетра вырнаçтарнине сӳтсе яврĕç. Иртнĕ çул Самарти пĕр учительница тавра хивре калаçнăччĕ. Çакна мĕнле хаклатăр?**

– Кун пирки сăмахăм татăклă. Пирĕншĕн, учительсемшĕн, кăмăл-сипет малти вырăнта. Тепĕр енчен педагогăн ятне варалакан кăларăмсене, тен, эфира кăлармалла та мар. "Школа" фильма аса илсен халĕ те çӳç-пуç вирелле тăрать.

**– Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа, Мария Николаевна!**

– Тавтапуç.

**Анатолий АБРАМОВ.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.



**Эпĕ ăна кашни кунах ирхине 7 сехетре Константин Иванов урамĕпе васкаса утнине куратăп. Елисей мăнукăма ача садне лле туртатăп, вăл шкулалла вĕçтерет. Эдита Пьехăн "Тĕлĕнтермĕш кӳршĕ" юрăри сăнар пекех Мария Николаевна: унпа алăри сехете те тĕрĕслеме пулать. Калатăпçке: шăп та шай 7 сехетре вăл "Кирпĕч завочĕ" чарăнура. Хĕрарăм яланах тем çĕкленĕ: е пĕр çыхă кĕнеке, е тĕрлĕ плакатсен тĕрки. Çак йĕркене вăл шăп та шай 3 теçетке çул тытса пырать. Чăваш чĕлхине вĕрентекен педагогсен хушшинче ырă ятлă вăл. Мария Николаевна – вĕренӳ кĕнекисен авторĕ, Чăваш Енри, Раççейри конкурссен çĕнтерӳçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.**

**2012 çулта Мария Печникова Чăваш Ен чысне "Пĕтĕм Раççейри тăван чĕлхе учителĕсен ăсталăх класĕ" педагогсен форумĕнче чыслăн хӳтĕлерĕ. Лара-тăра пĕлмен учительсĕр республикăри тата регионти ăслăлăх конференцийĕсем, олимпиадăсем, конкурссем те иртмеççĕ.**



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Çамрăк чĕлхеçĕсем

Елена АТАМАНОВА

**Çурла уйăхĕнче тăван тăрăхра каннă май Ĕпхӳ кайса килме тӳр килнĕччĕ. Тахçанхи ĕмĕте тинех пурнăçларăм. Вăхăт тупса пĕр-икĕ кĕнеке лавккине кĕрсе тухайрăм. Тĕлĕнмелле çав, сентре тулса тăкăнать, вĕрен, шĕкĕлче чĕлхене. Пушкăртла кăларнă мĕн тĕрлĕ кăна кĕнеке çук пулĕ вĕсен. Йăлтах паха хут çинче. Ача-пăча литератури хăй тем пысăкăш вырăн йышăнать. Тĕрлĕ методика кăтартăвĕсемпе вĕренӳ кĕнекисем, диктант пуххисем, темĕн тĕрлĕ словарь, кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли çыру тетрачĕсем купипех. Вуламалли литература та чылай. Пĕтĕмпех пушкăртла. «Кĕнеке туянаççĕ. Ача-пăча произведенийĕ те аван сутăнать», – терĕ лавкка заведующийĕ.**

**Ман пĕлĕшĕм Татьяна Михайловна Васильева Пушкăртстанри Стерлитамак хули çывăхĕнчи Косяковкăра чăваш чĕлхи вĕрентет. Хула çумĕнче ӳссе вырăсланма ĕлкĕрнĕ чăваш ачисем тăван чĕлхе урокне юратсах çӳреççĕ. Класпа укçа пуçтарса хăйсен шутĕнчен вĕренӳ кĕнекисем туянаççĕ. Вĕсем кăна та мар, узбек, таджик, пушкăрт, тутар, вырăс ачисем те хаваспах çӳреççĕ чăваш чĕлхи урокне. Ашшĕ-амăшĕ те чармасть. Уявсене те хутшăнаççĕ. Уйрăмах чăваш халăхĕн культури, аваллăхĕ, йăли-йĕрки интереслентерет вĕсене. Уроксем хыççăн юлса вĕрентекенпе пĕрле чăваш тумĕ çĕлеççĕ, тухья ăсталаççĕ. «Çамрăк чĕлхеçĕ» кружока çӳрекен те чылайăн. Ку е вăл предмета ачасем хисеплесси, юратса вĕренесси учительтен те нумай килет çав. Ячĕшĕн çеç пĕлӳ панине те, чĕлхене лайăх пĕлсе тĕплĕн вĕрентнине те шăпăрлансем тӳрех сисеççĕ. «Пĕрремĕш класра пирĕн уроксем вăйă евĕр иртеççĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртсах çыраççĕ, вулаççĕ. Кунта вĕсем нимле йывăрлăх та туймаççĕ. Вĕренӳ кĕнеки хăй питĕ интереслĕ. Тен, çавăнпа ку предмета кайран та хаваспах ăша хываççĕ», – чунне уçать учитель.**

**Татьяна Михайловна Стерлитамакри педагогика университетĕнчи вырăс филологи факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. Мĕн тăвăн, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен специалист çук та, предметаăна шанса панă. Тăван чĕлхене шкулта тăрăшса вĕреннĕ пулин те, çакă кăна çителĕксĕррине туйса, ăна хăй тĕллĕн шĕкĕлчет, тĕпчет. Урокĕсене тата та пуянрах, интереслĕрех ирттерĕччĕ те, шел те, хула шкулĕнче чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем валли методика кăтартăвĕсемпе программăсем, пособисем çителĕксĕр. Тăван чĕлхешĕн çунакан аякри чăваш Шупашкара пĕрмаях кĕнеке саккас парса ярать. Ĕнтĕ «Книжные новинки» лавккара ĕçлекенсене йăлăхтарсах çитертĕм. Çынна пулăшас килет, çавна май мĕнле те пулин çĕнĕ пособи тухман-ши тесе час-часах кĕрсе тухма тивет. Чăваш кĕнеке издательствинче шкулсенчен заявка кирлĕ терĕç. Çапла майпа мĕн ыйтнине, енчен те пичетленсе тухнă пулсассăн, ярса параççех. Пушкăртсен темшĕн лавккарах купаланса выртать. Мĕн кирлине ирĕклĕн туянма пулать. Пирĕн мĕншĕн саккаспа кăна-ши?**

**Тантăшăма пулăшас тесе кăçал та Шупашкарта кĕрсе тухман кĕнеке лавкки хăвармарăм. Тен, тахçанрах пичетленнисене тупса илме çук-и тесе шырарăм, шел те, вăл ыйтнисене тупаймарăм.**

**Шухăша кайрăм. Эпир те чĕлхеçĕсемпе профессорсенчен пĕрре те кая мар. Кашни утăмрах кандидат ятне тивĕçнисем. И.Н.-Ульянов ячĕллĕ университетри чăваш филологипе культура факультетĕнчен, И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика университетĕнчен вĕренсе тухса тепĕр тăватпилĕк çултанах кандидат диссертацине хӳтĕленисем сахал мар пирĕн. Тăрăшни, малалла талпăнни лайăх-ха вăл. Анчах та çав ята тивĕçессишĕн çеç ĕçлес марччĕ. Çĕрĕн-кунĕн тар юхтарса çырнă диссертацин усси пултăрччĕ. Ăçта та пулсан тусан çăтса ан выртăрах вăл.**

**Çапах та шкулсенче тăван чĕлхене тараннăн вĕрентме ал айĕнче пособи те, тĕрлĕ методика кăтартăвĕ те, словарь те пулмаллах çав. Пушкăртсенни пек. Унсăрăн епле-ха? Çакă ачасене тăван чĕлхене вĕрентес ĕçре чылай çăмăллăх кӳрĕччĕ.**

**– Малтан эпир О.Печников, И.Андреев кăларнă кивĕ-кивĕ кĕнекесемпе вĕреннĕ. Темле майпа пĕррехинче алла Галина Абрамовăн 5-мĕш класс валли кăларнăскерĕ лекрĕ. Епле хĕпĕртерĕм куншăн. Кайран çак авторăн 4-мĕш класс валли тухнине копи туса илме май пулчĕ. Çулталăк вĕрентĕмĕр çавăнпа. Меллех марччĕ те, анчах та ачисене интереслĕччĕ, – çапла калаçса кăтартать тăван чĕлхешĕн, унăн пуласлăхĕшĕн чунтан çунакан аякри вĕрентекен. Шкул ачисем валли кĕнекесем туянас тĕллевпе иртнĕ çул хăй Шупашкара килсе кайрĕ. Авторсемпе, хула шкулĕсене çитсе вĕрентекенсемпе курса калаçрĕ. Çитмен кĕнеке лавкки хăвармарĕ. Хăйне мĕн кирлине пăртак тупкаласа илчĕ. Халĕ 8-мĕш класс валли хатĕрленĕ кĕнеке кăна çук унăн.**

**Лару-тăру çав тери хăрушă тени тĕрĕсех мар пулĕччĕ. Ку енĕпе Г.В.Абрамова юлашки çулсенче тăрăшсах ĕçлерĕ. Чăваш кĕнеке издательстви тематика планĕ тăрăх унăн «Чувашское слово» вĕренӳ кĕнекине1 класран тытăнса 7 класс таран кăларчĕ. Халĕ Галина Васильевна 8-мĕш класс ачисем валли хатĕрлет. Учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтри редакципе издательство пайĕ пичете хатĕрленĕ Г.В.Абрамовăн «Учительсем валли хатĕрленĕ меслет кĕнеки. 1 класс» педагогсен патне çитрĕç. Шел те, тиражĕ ытлашши пысăках мар. «Чăваш чĕлхи» – 4 пин те 500 экземпляр çеç.**

СПОРТ

# Наци кросне – тулли кăмăлпа

Кăçал «Наци кросĕ» Раççейри 80 регионта иртĕ. Ăна пирĕн çĕр-шывра 2004 çултанпа тĕрлĕ çĕрте вăй хуракансемпе вĕренекенсен хушшинче сывă пурнăç йĕркине сарас тĕллевпе йĕркелеççĕ.

Авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарти кӳлмекре иртĕ вăл. Старта тухакансем ӳсĕмне кура 1-12 километр чупĕç. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансемпе пĕрле спорт ветеранĕсем, Олимп чемпионĕсем те ăмăртĕç. Кросс 11 сехет çурăра савăнăçлă лару-тăрура уçăлĕ. Унта хутшăнас кăмăллисен çумра паспорт, çуралнине ĕнентерекен свидетельство е страховани полисĕ, тухтăртан илнĕ справка пулмалла. Чупу хыççăн çĕнтерӳçĕсене чыслĕç. «Наци кросне» пурне те чĕнеççĕ.

**Елена БАШКИРОВА.**

## Стадион уçăлĕ

Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум пуçланиччен Çĕрпӳсем "Асамат" физкультурăпа спорт комплексĕнче стадион уçасшăн. Шăпах çав кун, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче, хулара сывлăх лапамĕсем ĕçлĕç, кĕнекепе журнал презентацийĕсемпе куравĕсем йĕркелĕç. Урамрах тухтăрсемпе курса калаçма май килĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

## Черетлĕ çĕнтерӳ

Татьяна Архипова – Вăрмар хĕрĕ, кросс тата вăрăм дистанцисене парăнтарас енĕпе палăрнă спортсменка. РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ 2012 çулта Лондонри Олимпиадăра марафон турнирĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Ĕпхӳре иртнĕ ăмăртура вăл Чăваш Ен чысне хӳтĕленĕ. Раççей чемпионатне çĕр-шыври 12 регионти 50 ытла спортсмен хутшăннă. Татьяна çĕр-шыври пултаруллă тепĕр марафонçăран, Омск облаçĕнчи Нина Поднебесноваран, иртсе финиша чи малтан çитнĕ. Унăн кăтартăвĕ 1 сехет те 12 минут та 33.8 çеккунт. Ку унăн ача çуратнă хыççăнхи пĕрремĕш çитĕнӳ.

**Елена МИШИНА.**

ЭКОЛОГИ

# Йывăç-тĕм ешерĕ

Республикăра кашни кĕркуннех йывăç-тĕм лартаççĕ. Кăçал та акципе килĕшӳллĕн тĕп хуламăрта кăна 4,5 пин йывăç тата 11,5 пин тĕм лартма палăртнă. Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа юпа уйăхĕн 24-мĕшĕччен Шупашкарта сут çанталăка сыхлас тĕллевпе тĕрлĕ мероприяти иртĕ. Йывăçсене аллейăсемпе парксенче, культура, вĕрентӳ учрежденийĕсен умĕнче, садсенче, çырма-çатрапа çул айккинче лартĕç. Акцие хутшăнакансем çавăн пекех çӳп-çаплă, таса мар вырăнсене тирпей кĕртĕç.

**Елена ГЛУХОВА.**

КĔСКЕН

# Пыл çиесчĕ кашăкпа



Патăрьел районĕнчи Турханти Николай Пирожковăн çĕр лаптăкĕнче хурт-хăмăр ăстисем субботник йĕркеленĕ. Вĕсем пыл паракан чечек вăррине пуçтарнă. Тупă курăкĕ /мордовник шароголовый/ 1 гектартан 1000-1200 килограмм таран пыл парать. Ăна Новосибирск облаçĕнчен 3 çул каялла ятарласа илсе килнĕ. Сăмах май, Турхан тăрăхĕнчи çынсем 33 гектар çĕр çинче пыл паракан ӳсен-тăран çитĕнтереççĕ.

Субботника килнисем 8 михĕ вăрă пухса типĕтме хунă. Хурт-хăмăрçăсем ĕç вăхăтĕнчех тĕрлĕ ыйту тавра калаçнă, опытлă зоотехникран канаш ыйтнă.

Тупă курăкĕ пыл паракан ытти ӳсентăранран каярах чечеке ларать. Шăрăхра та, типĕ çанталăкра та лайăх çитĕнет вăл.

# Сĕт хакĕ тĕрлĕрен

Вăрнар районĕнче, тĕслĕххрен, 17 предприниматель халăхран сĕт пуçтарать. Вĕсем кашни литршăн 13 тенкĕ параççĕ. Ытти районта вара хак тĕрлĕрен. Патăрьел тăрăхĕнче 1 литр сĕте 13,8 тенкĕпе йышăнаççĕ. Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Шупашкар районĕсенче 14 тенке çитнĕ вăл. Шăмăршă тăрăхĕнче пурăнакансене ыттисем ăмсанаççĕ ахăр. Унта кашни литр сĕтшĕн 15,5 тенкĕ тупăш илме май пур.

# Çут çанталăк тусĕсем

Ачасене пĕчĕкренех тавралăха сăнама, çут çанталăка упрама вĕрентмелле. Улатăр районĕнчи Междуречьери информаципе кану центрĕнче кĕçĕн класра вĕренекен ачасем валли "Вăрман вăрттăнлăхĕсем" экологи викторини йĕркеленĕ. "Ку йывăçа пĕлетĕн-и?", "Чĕр чунпа кайăк-кĕшĕк", "Юрă йĕркисене аса ил" конкурссене хутшăннă вĕсем. Çакнашкал мероприяти, паллах, пĕчĕккисен тавра курăмне аталантарать. Юлашкинчен шăпăрлансем çут çанталăк çинчен çырнă кĕнекесем сӳйласа илнĕ. Çакă та вĕсен пĕлĕвне таранлатма пулăшĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА хатĕрленĕ.**

АС ТĂВĂМ

# Айхин юлташĕсем Чăваш Еншĕн тунсăхлаççĕ

**Чăваш халăх сăвăçин Геннадий Айхин чикĕ леш енчи юлташĕсем Правительство çуртне пуçтарăнчĕç. Вĕсем, Аслă Британирен, Швецирен, Норвегирен килнĕскерсем, Геннадий Николаевичăн ĕçĕсене куçарса вулакан патне çитереççĕ. Хăнасем амăшне халаллană "Вун пилĕк çултан" сăвва чăвашла, акăлчанла, норвегилле, шведла вулани чуна хускатрĕ. Аса илтеретĕп, Геннадий Айхин сăввисем 50 ытла чĕлхепе пичетленнĕ.**

"Асра тытсассăн вăл ĕмĕр халăх чĕринче пурăнĕ", – терĕ ЧР информполитика министрĕ Валентина Андреева. Çавнашкалах 80 çулхи юбилей çулталăкĕнче Геннадий Айхине халаллană нумай мероприяти йĕркелеме палăртни çинчен каларĕ вăл.

Ахальтен мар Атнер Хусанкай филолог Айхистсен ушкăнĕ тавра сăмах пуçарчĕ. Çак тĕл пулу хамăр тăрăхра кăна мар, ют çĕр-шывра та унăн ĕçне тăсакансем пуррине çирĕплетет.

"Хаклă туссем! Пурсăра та салам!" – кĕтмен çĕртен чăвашла каларĕ Питер Франс. Вăл – Британи академийĕн тат Эдинбургри Король обществин членĕ, Митта Ваçлей премийĕн лауреачĕ. 1991 çулта Геннадий Айхи пухса хатĕрленĕ "Чăваш поэзийĕн антологине" акăлчанла куçарнă.

Салам сăмахĕсем те юлташĕ каланисемех. Ун чухне, 1989 çулта, Геннадий Айхипе иккĕшĕ самолетпа Шупашкара вĕçнĕ. Тăван тăрăха сывхарнă май сăвăç хăлхинчен пăшăлтатса вĕрентнине асран кăлармасть вăл. "Халĕ Раççейре те сайра хутра кăна пулатăп. Хамăр патрах ĕç нумай. Çав вăхăтрах Раççее килсен Чăваш Республикине çитмесĕр пултараймастăп", – тет Питер Франс.

Уппсале университечĕн филологи факультечĕн хисеплĕ докторĕ Анника Бэкстрем антологие шведла куçарнă. Хĕрарăм Геннадий Николаевичпа иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче паллашнă.

– Ун чухне ăна хула кăтартма ыйтрĕç. Кунĕпе



пĕрле çÿресе туслашрăмăр. Кайран Айхи пирĕн патра та пулнă. Манăн мăшăра та лайăх пĕлнĕ. Унтан унпа çыру çÿретме пуçларăмăр. Малтан чăваш халăхĕ çинчен нимĕн те пĕлмен – вăл каласа кăтартрĕ, – асă илет Анника Бэкстрем. – Швеци те чăваш çĕрĕ пекех пĕчĕк çĕр-шыв. Манăн шухăшпа, пирĕн пĕр пеклĕх нумай. Айхи çуккишĕн тунсăх пусса илет. Çав вăхăтрах тĕнчере çавнашкал çын пурăннишĕн чун хĕпĕртет.

Сăвăç витĕмĕпе хĕрарăм чăвашла вĕренме пуçланă.

Пур пĕрех Геннадий Айхине чикĕ леш енче вырăсла сăввисем урлă пĕлеççĕ. Халĕ чăвашлисене те куçарма пуçланă. Швеци поэчĕ Микаэль Нюдаль сĕннипе поэтăн 6 сăввине харăсах акăлчанла, норвегилле, шведла куçарса уйрăм кĕнекен пичетлени – мăнаçланмалли тепĕр пулăм.

Ĕçе пуçăничен Геннадий Айхин йăмăкĕпе Ева Лисинăпа нумай канашланине аса илчĕ вăл. Çакă ăна чăваш халăхĕн чунне ăнланма пулăшнă.

– Пирĕн килте ют çĕр-шывран килнĕ нумай çын хăналаннă. Питер Франспа вара чи малтан паллашнă. Вăл Айхи çуккине туйни пирки каларĕ. Манăн чун та çакна туять. Ăна юлашки кунчченех асра тытасса пĕлни çеç лăплантарать. "Чăвашла шедеврсене пичетлесе кăларатăп", – теттĕм. Малтанах васкаман. Кайран, вăхăт сахал юлсан тин: "Пичетлесе кăларах", – сĕнчĕ.

Йывăрланса çитсен пушшех самантлăха та пулин кăмăлне çавăрас килетчĕ. Унăн куллине курас тесех юр çинчен сăвă çыртăм. Темиçе йĕркеллĕскерне "поэма" терĕм. Иксĕмĕрĕн хутшăнусене ачалăхри пек вăйă сĕмĕ кĕртесшĕнччĕ. Çавăн чухне унăн кăмăлне тупрăм – вăл кулса кăтартрĕ.

Йывăр чухне Геннадий Айхи чăвашла çыратчĕ. Чунĕ кÿтсе çитнĕ вăхăтра хайланă 18 сăвă хăварнă. Вĕсенче унăн чунĕ юлнă.

Норвеги поэчĕ Гуннер Вэрнесс чăваш поэчĕпе 2005 çулта фестиваль вăхăтĕнче паллашнă. Пĕрре курнăçниех ĕмĕрлĕхе асра юлнă. Айхи пултарулăхĕ урлă сăвăç тĕнчене мĕнле хакланине тишкерет вăл. Çав вăхăтрах чăваш халăх культурине ăша хывать.

– Геннадий Айхи ман тĕлĕке тăтăш килет. Вăл халĕ те чĕрĕ пек. Куçару ĕçĕнче те пулăшнăн туйăнать, – палăртать Гуннер Вэрнесс.

Айхи вырăсла пичетленнисĕр пуçне чăвашла çырнине пĕлсен тĕлĕннине пытармарĕ вăл. Çапах-ха хăшне куçарма çăмăлрах-ши? Чăвашлисем вырăслисенчен кĕвĕлĕхĕпе уйрăлса тăнине палăртрĕç ют çĕршыв çыннисем.

Ева Лисина пиччĕшĕн сăввисене ăста куçарнăшăн хăнасене тав турĕ.

Тепĕр кун куçаруçăсем Патăрьел районĕнчи Çĕньяла çитрĕç, поэтăн вил тăпри умĕнче пуç тайрĕç.

К.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче "Ултă сăвă" кĕнеке презентацийĕ иртрĕ. Хăнасем ыран çула тухĕç. Тăван тăрăха çитсен ăшă тĕл пулусем çинчен каласа-çырса кăтартĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

АЛ ĂСТИСЕМ

# Хуçи ырă пулмасан хăни пырса çÿремест

Чăваш хĕр-упраçĕ мĕн ĕлĕкренех улах ларса ал ĕçĕ тунă, качча кайма арча тулли тупра пухнă. Анчах халĕ пикесем мар, аслăрах ăрурисем пухăнаççĕ.

Вăрмар районĕнчи Энтиялъ хĕрарăмĕсемшĕн пахчари ĕçпуç улахран пăрăнмалли сăлтав мар. Çу каçипех кашни эрнерех вулавăша пуçтарăнна вĕсем. «Упăшкасем – Мускавра. Кампа калаçса чуна уçас? Кун пек чухне кÿршĕ-аршăпа хутшăнние нимĕн те çитмест», – теççĕ вĕсем.

Хуçи ырă пулмасан хăни пырса çÿремест. Ку калаврăш Галина Ефремова библиотекарьпе культура çурчĕн меслетçи Зоя Григорьева çинченех. Вĕсем илĕртме пĕлнĕренех вулавăшран та, клубран та çын таталмасть. Педагогика ветеранĕ, 34 çул шкулта математика вĕрентнĕ Нина Арсентьева кăçал нарăс уйăхĕнче хĕрарăмсене улаха пухăнма сĕннĕ, хăй мĕн пĕлнине уттисемпе пайламашкăн килĕшнĕ.

«Унăн килне кайса курасчĕ сирĕн! Пÿрчĕ – музей евĕр, пахчи епле тирпейлĕ, пур çĕрте те хăтлăх хуçаланать», – ăнлантарать Зоя Николаевна. Ахальтен мар: «Çыхатпăр, тĕрлетпĕр – пурнăçа илемлететпĕр» девизпа ĕçе пикеннĕ мар-и хĕрарăмсем? Илем – тĕнчене çăлатенĕ. Чăнах та, çын чунне аталанмашкăн пулăшать вăл, кăмăла çĕклет.

Пултарулăх ушкăнĕсен кăтартулă концерчĕ тĕлне ал ăстисем курав йĕркелесе çитернĕ. Ун чухне вĕсен япалисене халăх кăсăкланса пăхнă, туянакан та тупăннă. «Пире çĕнĕ шухăш тупмашкăн Интернет чылай пулăшать. Анчах та Нина Васильевна япалана нихăçан та çынăнни пек тумасть, яланах улăштарать, урăх сĕм кĕртет. Ку тĕлĕшпе ăна ăмсанасси çеç юлать пирĕн, шухăшлавĕ анлă унăн», – палăртаççĕ пухăннисем.

Альбина Вдовик çекĕлпе çыхма ăста. Унăн япалисене Мускавра та туянаççĕ. Нумай пулмасть кăна пирĕн çĕр-шывăн тĕп хулинче ĕçлесе пурăнакан хĕрĕ пĕр çĕклем йăтса кайнă, саккас паракансем тупăннă-мĕн. Çыхма кăна мар, тутлă апат-çимĕç янтăлас енĕпе те ăна çитекенни çук-мĕн.

Ачинск хулинче 53 çул пурăннă хыççăн Людмила Кухаренко Энтиялне таврăннă. 79-ти амăшне Иустина Андреевнăна пĕччен пурăнма йывăр-мĕн. Вырăсла калаçакан хĕрарăма та клуб ертÿçи туслă хăйсен ушкăнне чĕннĕ, лешĕ хирĕçлемен. Çавăнтанпа пĕр кун сиктермесĕрех вулавăша çÿрет Людмила Александровна. «Кофта çыхнă чухне тăваткалсене сыпăнтарма пĕлмен, кунта йăлтах вĕрентеççĕ», – тет вăл.

4 ача амăшĕ, 4 лавкка тытса тăракан бизнес-леди Надежда Ерукова та пур ĕç-пуçа пăрахсах чунпа канмашкăн улаха чупать. Мăшăрĕ çакна хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ, пепкисемпе хăй юлать.

78-ти Анна Хлебникова çыхнă чухне куçлăх та тăхăнмасть. Раиса Савитова вара пĕрре ларсах мăшăр нуски çыхса хурать иккен.

Улахра Пысăк Енкасси шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен Анастасия Галкинăпа Юлия Андриянова та пурччĕ. Хĕр-упраç пуçа пĕксех çыхатчĕ. Аслă ăрупан вĕренмелли нумай вĕсен.

Хĕрарăмсен алли ĕçпе ыляна хушăра Галина Ефремова библиотекарь тĕрлĕ мероприяти ирттерет. Хăй вăл çыхма кăмăлламасть-мĕн. «Ун пек упăшкапа пурăннă чухне мĕн тума чăрманас?» – терĕ тахăшĕ. «Мĕнле арçын вара вăл?» – кăсăклантăм эпĕ. Илья Владимирович – клубра пултарулăх ертÿçи, çав кун кĕтÿ пăхма кайнăччĕ. Çынсем калană тăрăх – карçинкка ăсталать, çăм арлать, алса-нуски çыхать, кукăль пĕçерет, оригами тăвать, калча ÿстерет... Вăл тума пĕлмен ĕç çук килти хуçалăхра», – ăмсанаççĕ хĕрарăмсем. «Апла ăна та улаха чĕнес», – сĕнтĕм эпĕ. «Çук, кунта пирĕн «девичник». Ун патне эпир юрлама çÿретпĕр», – ăнлантарчĕç пултарулăхскерсем.

Халăхпа пĕрле пулнинчен ырри нимĕн те çук, çакна тепĕр хутчен курса ĕнентĕм.

**Алина ИЗМАН.**

МАТТУРСЕМ!

# Пахчи-пахчи, улма пахчи...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

– Пÿрчĕ умĕнчи хитре чечексем çинчен куç илмесĕр иртсе кайкаланăха. Малтан вара Матвеевсем патне пĕртте кĕрсе курман. Кайран ялта çынсем вĕсен пуян та илемлĕ, никамăннипе танлаштарма çук илĕртÿллĕ пахчи пирки калаçма пуçларĕç. Эпир те курма вĕçтертĕмĕр, çавнашкал хитре пурăннинчен питĕ тĕлĕнтĕмĕр, – каласа кăтартать ялти культура çурчĕн пуçлăхĕ Юлия Николаева.

Матвеевсем иртнĕ çул республикăра иртнĕ конкурса хутшăнса «Канмалли чи хăтлă кĕтес» номинацире 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Кăçал районта мала тухнă.

Регина Ильинична пире мăшăрĕ ăсталанă беседкăра пылак та сĕтеклĕ арпуспа, тутлă иçĕм çырлипе, пан улми-грушăпа хăналарĕ. Пахчинче типтерлĕх хуçаланать, ниçта пĕр çум татки те курăймăн. Хăяр-помидорĕ, купăстипăрăçĕ те питĕ ăнса пулнă. Ку хуçисенчен нумай килет пулĕ çав. Юратса, ăшă кăмăлпа ÿстереççĕ вĕсем калчасене. Вăл кăна та мар, çемье ÿркенменни, çĕр ĕçне чунтан парăнни куç кĕрет. Ăш пиллĕ те тараватă, пĕрмай лайăххи патне ăнтăлакан çынсен пурнăçĕ те хитре. Вĕсем ăмсанмаççĕ, ĕçрен хăрамаççĕ, кÿршĕ-арша, ял-йыша мĕн пур ыррине кăна сунаççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.

КУН-ÇУЛ

# 95-ри Чĕкеç аппа кăмпа пуçтарать, çĕр улми кăларать...



Эпир çитнĕ чухне Чĕкеç аппа кăмпа тасататчĕ. Ăна пахчи хыçĕнчи катаран карçинккапах пуçтарса килнĕ. «Хĕл валли тăварласа хурасшăн. Çĕр улмипе çиме питĕ тутлă. Каярах тепре каятăп-ха», – терĕ Чĕкеç аппа.

Çемьере вĕсен пĕтĕмпе ултă ача пулнă, анчах пĕри те нумай пурăнайман. Чире пула пĕрин хыççăн тепри вилсех пынă. Ашшĕпе амăшĕ аптраса çитнĕрен кĕçĕн хĕрне Чĕкеç ят хурса пăхас тенĕ. Хут çинче вара – Татьяна. Кайăк, чĕр чун ячĕпе чĕнсе, тен, тĕрĕсех тунă-ши вăл вăхăтра? Чĕкеç пĕртте чирлемен, таса-сывă çитĕннĕ. Иккĕн çеç ÿснĕ вĕсем çемьере. Пĕртен пĕр шăллĕ Алексей тăватă çул каялла ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

– Атте анне вилсен тепре авланчĕ. Эпĕ ун чухне хĕр шутне кĕме тытăннăччĕ ĕнтĕ. Ама çури анне урăхларах çав, хăвăнни пек мар. Унăн ăшшине туйсах курман. Вĕсен тепĕр икĕ ача – хĕрпе ывăл – çуралчĕ, – каласа кăтартать Чĕкеç аппа.

Нушине вăл çамрăклах нумай курнă. Вăрçăчченхи выçлăха та чăтса ирттернĕ. Çăкăрсăр, пĕр пĕрчĕ кĕрпесĕр ларнă кунĕсем пайтах пулнă. Канаша çур çĕрте çăкăр илме кайнисене те аса илчĕ. Çук, кашнинчех пушă алăпа таврăнма тивнĕ. Харсăртараххисем ача-пăчана лаша çунисем патне те пыртарман. Вăрçă вăхăтĕнче Тăвай районĕнчи Эльпуçĕнче йĕпе-сапине, çил-тăманне пăхмасăр чылай вăхăт хушши окоп чавнă. Тылра аслисемпе тан хăйне хĕрхенмесĕрех ĕçленĕ хĕр упраç.

Уçырмаран аякра мар вырнаçнă Кармамие качча тухнă Чĕкеç. Мăшăрĕпе пĕрле пилĕк ача çуратнă. Шел, пĕр хĕрĕ тăватă çулта чухнех чеччепе чирлесе вилнĕ.

–Кун кăтартмарĕ мана Ваçук. Ĕçетчĕ те çапăçатчĕ, ун пек арçынпа пурнăç тăваймăн. Ĕçлеме тесе кайран аякка тухса кайрĕ те унтах авланчĕ. Пĕр ачана хăйĕнпе илсе каясшăнччĕ, ĕçекен арçынна хĕр те, ывăл та памарăм. Тăван яла уйрăлса килсе ачасемпе пĕрле хам тĕллĕнех çурт лартрăм. Аслă хĕр Зоя çитĕннĕччĕ ĕнтĕ. Вăл укçа-тенкĕпе нумай пулăшрĕ, – чунне уçать Чĕкеç аппа.

Телейлĕ халь Татьяна Петровна. Ывăлĕ Георгий Канаш хулинче пурăнать. Алюш килтех, ытти ывăлхĕрĕ ялта тĕпленнĕ. Ачисем амăшне тунсăхлама памаççĕ, килсех çÿреççĕ. Куç тулли тăхăр мăнук кинемин. Ашшĕпе амаçури амăшĕнчен çуралнă Варуç та Чĕкеç аппана хăй амăшĕ пекех юратать. Сĕт, юрвар йăтать ун патне. Май пур таран пулăшать ватăскере.

Чĕкеç аппан сад тулли улма-çырла. Сарă слива тураттисене аран йăткаласа ларатчĕ. Çÿлте çакăнса тăракан тутлă та сĕтеклĕ пан улмисене патакпа кăна çапса антарать кинеми. Улма йывăççисемпе пахча хыçĕнчи хурăн-çăкасемпе йăмрасене юратнă ачисемпе мăнукĕсен ячĕпе лартса ÿстернĕ вăл.

– Тавах турра, вăй пур-ха ман. Ура утать, куç курать, çавăнпа та пĕр вырăнта ларас килмест, – тет 95 çулти ватă. Çав вăхăтрах пире те хăй çулне çитме пиллет ăш пиллĕ кинеми.

Хĕл валли чей курăкĕ, хурăн милĕкĕ нумай хатĕрленĕ Чĕкеç аппа. Вĕсене типтерлĕн мачча тăррине çакса хунă. Ахаль чейрен юн пусăмĕ ÿсетмĕн. Ывăлĕ пушанасса кĕтсе тăмасть, мунчине те хăех хутать. Ытти çулти пекех кăçал та сухан çыххи явнă, çĕр улми те кăларнă... Хăйне йăпанмашкăн чăхсем усрать.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

КУЛЬТУРА

# Унашкал кермен таврара çук

Икĕ çул каялла Тĕмерти культура çуртĕнче кăвак çулăм та çунман. Ăна çутăпа кăна ăшăткаланă. Ларутăрăва лайăхлатас, урăх кун пек пурăнма юрамасть тесе ЧР Патшалăх Канашне çырупа тухнă ял çыннисем. Хăюллă та харсăр халăх пурăнать çав ку енче. Çÿлтисем ку ыйтăва вăраха ямасăрах татса панă. Çав кунранпа ял клубĕ Тĕмерсене кăна мар, таврари ялсене те пуçтарать. Ăшă та хăтлă кунта. Çу кунĕнче те халăх татăлма пĕлмест халь. Культура çуртĕн пуçлăхĕ Зоя Спиридонова отпускра пулнă май унпа килĕнче тĕл пултăмăр. Зоя Борисовна канма та пĕлменни тĕлĕнтерчĕ пире. Килте алă усса лармасть ĕçчен Элĕк хĕрĕ. Отпуск вăхăтĕнче ялти механизаторсем валли апат пĕçерет-мĕн.

Ман шухăшпа, ялти клубăн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри – чăвашлăх никĕсне, йăли-йĕркипе культурине упраса хăварасси, ку тăрăхра тĕпленнисен, уйрăмах – çамрăк ăру кун-çулне çутă та пуян, интереслĕ йĕркелеме пулăшасси. Тĕмерти культура çуртĕ шăпах çав йышшисенчен пĕри.

Клубра ал ĕç тата ташă, спорт кружокĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕтĕ шăрçапа çыхма, тĕрлеме ăста Тĕмерсем. Пурнăçра кирлĕ тата ытти ĕç-пуça алла илме пулăшаççĕ культура ĕçченĕсем. Ташлама ачасем кăна мар, пушă вăхăт тупса 30-40 çулти хĕрарăмсем те хаваспах çÿреççĕ. «Илем» тата «Хавас» ушкăнсенче – аслăрах çулти шкул ачисем. Чăвашла хитре юрăсем шăрантаракан «Илем» солисткисене – Надежда Львовăпа Надежда Уткинăна таврара та аван пĕлеççĕ. Вунă çул каяллах йĕркеленнĕ икĕ ушкăн районти конкурссене хутшăннисĕр пуçне час-часах кÿршĕ ялсемпе районсене тухса хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарать. Республика кунĕнче иртнĕ Акатуя та хутшăннă хастарсем. «Сцена çинче хĕрсемпе каччăсем вăтанма пăрахаççĕ, хăйсене ирĕклĕрех тытма пуçлаççĕ, тусюлташ тупаççĕ», – каласа кăтартать Зоя Борисовна.

Тунти кунсăр пуçне культура çуртĕн алăкĕ кашни кунах уçă. Теннисла, шахматла выляма юратаççĕ ял çамрăкĕсем. Телевизор курма килекенсем те пур. Аппаратура енчен те чухăн мар, мĕн кирли йăлтах пур. Ку енĕпе район депутачĕ К.Мифтахутдинов чылай пулăшнă.

Зоя Борисовнăпа Владимир Геннадьевичăн икĕ ывăлпа пĕр хĕр. Ывăлĕ Андрей та шкулта вĕреннĕ чухне клубран тухма пĕлмен. Вырăсла хитре юрăсем шăрантаракан яша районта та хăвăртах асăрханă, Гран-прие илме тивĕçнĕ вăл. Кăçал вăл Шупашкарти строительство техникумĕнчен хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. Халĕ Питĕрти аслă шкулта пĕлÿ пухать. Кĕçĕнни Никита Мускав автомобильпе çул-йĕр институтĕнче вĕренет.

Туслă çемье ĕçченлĕхпе, тăрăшулăхпа палăрса тăрать. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп усраççĕ. 50 сотка çĕр çинче утă, тĕрлĕ пахча çимĕç, улма-çырла çитĕнет. Кермен евĕр çурта нумай пулмасть лартнă вĕсем. Кил хуçи Мускава ĕçлеме çÿрет. Проектне те тĕп хуларанах илсе килнĕ. «Хальлĕхе вĕсенни пек çурт пирĕн ялта пĕрре кăна. Иккĕшĕ те тăрăшуллă. Володьăн алли ылтăн», – терĕç пире аçта пурăннине кăтартса янă май ял çыннисем. Тул енчен те, шал енчен те çĕнĕ вырăссеннинчен нимĕнпе те кая мар кермене эпир те кĕрсе куртăмăр. Ял çыннисем пĕри тепринчен хитререх, пуянрах пурăнма тăрăшнишĕн савăнтăмăр.

**Елена ГЛУХОВА.**
Елчĕк районĕ.

АХ, АНЧАХ...

# Сансăр пĕр чун та пурăнаймасть

Эсĕ пире пурне те, пурне те питĕ юрататăн. Шăрăхра вăркăш çилпе лăпкаса уçăлтаратăн, сивĕре хĕвелпе ăшăтатăн. Хăвăн сĕткенÿпе пире тăрантаратăн. Темĕн чухлĕ ырăлăх парнелетĕн. Пĕр нимсĕр. Ахалех. Эпир санăн асамлăхунтан тĕлĕнсе, илемÿпе киленсе, савăнса пурăнатпăр. Анчах сана упрама пачах тăрăшмастпăр-çке: ешĕл курăка, чечеклĕ улăх-çарана, вăрмансене варалатпăр, вататпăр, касатпăр. Çĕре, шыва усал наркăмăшпа чыхлантаратпăр... Хăш-пĕр çĕрте кайăксем те юрлаймаççĕ, чĕпписем йăвисенчех вилеççĕ. Юхан шывра пулăсем пĕтеççĕ. Нумай çĕрте курăк та аран-аран çитĕнет. Ун пек вырăнтан хăвăртрах тарас килет. Ларас та, тăрас та килмест. Сывлама йывăр. Чуна тăвăр. Мĕншĕн тесен унта вăрçă пырать. Йăлт арканать...

Мĕншĕн? Мĕншĕн çав териех асап тÿсетĕн-ши, Çĕр аннеçĕм?! Мĕнпе айăпа кĕтĕн? Эпир пурте санăн-çке. Санăн. Çут çанталăк ачисем! Сансăр, Çĕр аннеçĕм, никам та, пĕр чун та пурăнаймасть. Сана çеç никам та шеллемест. Çĕр чăмăрĕ çинчи мĕн пур пуянлăхпа ырă курса пурăнатпăр, иртĕхетпĕр тата. Çак мăшкăла чăтаймасăр вăхăтăн-вăхăтăн эсĕ сасăсăр йĕретĕн. Хăш чухне санăн куççулÿ пирĕн çине шăпăртатса тумлать...

Темле йăнăш тусан та амăшĕ хăйĕн ачисене каçаратех. Çав-çавах юратать. Çитменлĕхĕсене курмăш пулать. Эсĕ те каçар пире, Çĕр аннем. Йывăр сана. Тÿсме çук йывăр. Тен, этем çапах та тăна кĕрĕ? Çут çанталăк ачисем – çитес ăру – валли упрамаллине шухăшласа илĕ?..

**Лидия САРИНЕ.**



ШУТА ИЛМЕ

# Сиплĕ те усăллă

**Иçĕм çырли сĕткенĕ** организмри холестерин шайне чакарать.

**Хура çырла сĕткенĕ** вар-хырăмлăх тата пыршăлăх чирĕсемпе кĕрешме пулăшать. Куç çивĕчлĕхне тавăрать.

**Пан улми сĕткенĕ** – склерозпа кĕрешмелли мел. Вăл чĕре тата юн тымарĕсен тытăмне çирĕплетет. Çавнашкалах ăна атеросклероз, подагра аптăратсан, хырăмлăх ĕçĕ пăсăлсан ĕçме сĕнеççĕ.

**Груша сĕткенĕ** шăк хăвалать.

Куллен **купăста сĕткенĕ** ĕçсе хырăмлăх çĕрнине сиплеме май пур.

**Чĕрĕ кишĕр сĕткенĕ** ĕçсен юхан-суранран кăна мар, малтанхи тапхăрти ракран та хăтăлма пулать. Унсăр пуçне вăл апат ирĕлессине йĕркелет, шăл тытăмне лайăхлатать.

**Хĕрлĕ кăшман сĕткенĕ** иммун тытăмне çирĕплетет. Анеми нушалантарсан, тула тухаймасăр аптăрасан, пĕвер чирĕсем канăçсăрлантарсан вăл уйрăмах усăллă.

**Кавăн сĕткенĕ** начарланма пулăшать. Вар-хырăм, чĕре чирĕсем «çыпăççан», нерв тытăмĕ хавшасан унпа сипленме сĕнеççĕ. Çие юлсан хăсас килнине ирттерет. Ыйхă çĕтсен те çак сĕткене ĕçмелле.



ПĔЛЕТĔР-И?

## Кофе витĕмĕ

Пӳртре ӳсекен хăш-пĕр чечек кофене кăмăллать. Унпа йӳçĕк тăпрана юратакан азалие, камелие, эрикăна тата ыттине апатлантармалла. Кофепе тăпра çемçе те кăпăшка пулать. Виçи çакнашкал: чӳлмек пуçне пĕр стакан. Пылак кофе юрамасть – ăна пула пӳлĕмре вĕтĕ шăна ĕрчесе кайĕ.

## Яшка тĕсне çухатасран

Борщ хитре тĕслĕ пултăр тесен кăшмана ытти пахча çимĕçрен уйрăммăн ăшаламалла. Лимон йӳçекĕ, уксус яма ан манăр. Хĕрлĕ кăшмана кăмакара пĕçерсен те лайăх. Яшка пиçес умĕн ăна теркăласа е тураса ямалла.

## Çур сехетрен типет

Йĕпе-сапаллă çанталăкра атă-пушмак хăвăрт нӳрелет. Ăна часах типĕтмелли меслет те пур. Пир-авăр нуские вĕрилентернĕ хăйăр тултармалла та пушмак ăшне чиксе хумалла. Çур сехетрен тип-типĕ пулĕ.

## Хушăк саплама

Бетон маччари хушăка пĕтерме çăмăл мар. Сапласан та нумая пымасть, çапла-и? Кăлтăка пĕтерме «Серпянка» строительство бинчĕ лайăх пулăшать. Гипс бинтпа та хушăка хуплама пулать. Бинта ПВА çилĕмпе çыпăçтармалла. Типнĕ хыççăн ПВА хушнă çуллă шпатлевкăпа çӳхен сĕрмелле. Сапланă вырăн типсен маччана сăрлама е шуратма юрать.

## Сумка çĕнетме

Çутă сумкăна çĕнĕ сăн кĕртме япăхнă вырăна пите тасатмалли «сĕтре» йĕпетнĕ мамăкпа сăтăрмалла. Лак сумка валли йĕтĕн çăвĕ туянăр.

## Каçхи ултă сехет хыççăн

Начарланас текенсем мĕн тĕрлĕ диетăна кăна пăхăнмаççĕши? Çинçешке те илĕртӳллĕ пулас тесе каçхи ултă сехет хыççăн апат çимеççĕ. Ку сывлăхшăн сиенлĕ иккен. Выçă тытнине пула япала ылмашăвĕ япăхланать, тĕртĕм виçи чакать, ӳтре çу хушăнать. Диетологсем тĕрĕс апатланма, кунне пилĕк-ултă хутчен пĕр пек виçепе çиме сĕнеççĕ.

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



## Кишĕр кексĕ

**500 грамм кишĕр, 100 грамм хăйма, 100 грамм майонез, шăратнă 1 сыр, 3 шăл ыхра, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Кишĕре, сыра теркăламалла. Майонеза хăймапа, вĕтетнĕ ыхрапа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Кишĕре соуспа, сырпа пăтратмалла. Кекс формине кишĕр хутăшĕ тултарса 1-2 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Унтан кекса турилккене хумалла, укроппа, петрушкăпа илемлетмелле.

## Пан улмипе тăпăрч хăпартăвĕ

**200 грамм тăпăрч, 80 грамм хăйма, 2 пан улми, 1 çăмарта, ванилин, 1 апат кашăкĕ сахăр, пĕр ывăç иçĕм çырли, 1 апат кашăкĕ манна кĕрпи, услам çу кирлĕ.**

Тăпăрча сахăрпа, хăймапа, ванилинпа пăтратмалла, кăпăклантарнă çăмарта, манна кĕрпи, иçĕм çырли хушмалла. Çак хутăша услам çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Çиеле çурма çаврашкан каснă пан улми хумалла. Унтан манна кĕрпи е сахăр сапмалла. Хăпартăва духовкăра 35-40 минут пĕçермелле.

## Кĕрхи салат

**2-3 кишĕр, 3 пан улми, 0,5 стакан иçĕм, 0,5 стакан куккурус хăрпăкĕ, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма кирлĕ.**

Пан улмине тăваткалласа турамалла. Иçĕме вĕри шыва ямалла. Кишĕре теркăламалла. Çимĕçсене шĕвĕ хăймапа пăтратмалла.

## Ăшне тултарнă пăрăç

**2 пылак пăрăç, 250 грамм майонез, 2 шăл ыхра, шăратнă 2 сыр, 2 çăмарта, 1/2 чей кашăкĕ тăвар, авăртнă пăрăç, петрушка кирлĕ.**

Çăмарта пĕçермелле. Шăратнă сыра, çăмартана теркăламалла. Ыхрана вĕтетмелле. Пăрăç вăррине кăлармалла. Петрушкăна вĕттĕн касмалла.

Çăмартана сырпа, ыхрапа, петрушкăпа, майонезпа пăтратмалла, тăварпа пăрăç хушмалла. Çак хутăша пылак пăрăçа тултармалла. Çимĕçе çурмалла е çаврашкан касмалла.

## Икерчĕ кукăлĕ

**Чуста валли 4 çăмарта, 6-7 апат кашăкĕ çăнăх, 1 стакан сĕт, тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума пуçлă 3 сухан, 1 шăл ыхра, 300 грамм шампиньон, 0,5 банка çу çырли, 1 помидор, 1 çăмарта, 150 грамм сыр, тăвар, пăрăç, укроп, тип çу, 200 грамм тăпăрч хатĕрлемелле.**

Чустаран икерчĕ пĕçермелле. Вĕттĕн туранă кăмпана, сухана, ыхрана ăшаламалла, тăварпа пăрăç хушмалла. Тăпăрча çăмартапа, вĕтетнĕ укроппа пăтратмалла, тăварпа пăрăç ямалла.

Кашни икерчĕ çине кăмпа хутăшĕ хумалла. Ăна çавăрса çатмари тăпăрч çине хумалла. Çиелтен вĕтетнĕ çу çырлипе, помидорпа витмелле, теркăланă сыр сапмалла. Кукăле духовкăра 40 минут пĕçермелле.

## Сырпа, помидорпа

**Чуста валли 1 стакан çăнăх, теркăланă 1 апат кашăкĕ сыр, 65 грамм услам çу, 1-2 апат кашăкĕ сивĕ шыв, 1 лимон сĕткенĕ, 1/4 чей кашăкĕ сахăр, 1/2 чей кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума 5 помидор, 0,5 стакан майонез, теркăланă 1 стакан сыр, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Чуста çăрмалла. Ăна йĕтĕрлесе çатмана сармалла, айккине хăпартмалла.

Вĕри шыва чиксе кăларнă помидора хуппинчен тасатмалла, вĕттĕн турамалла. Пахча çимĕçе техĕмлĕхпе пăтратмалла. Сыра майонеза хутăштармалла. Чуста çине малтан помидор, унтан сырпа майонез хумалла. Кукăле духовкăра 40-45 минут пĕçермелле.

## Варени торчĕ

**2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 1 стакан сĕт, 1 стакан варени, 2 чей кашăкĕ апат соди, 2 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Крем валли 2 стакан хăйма, 1/2 стакан сахăр çăнăхĕ хатĕрлемелле.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, варени, сĕт, çăнăх, апат соди хушмалла. Чустаран 2 пашалу пĕçермелле. Хăймана сахăр çăнăхĕпе пăтратмалла. Пашулусене хăйма кремĕпе сĕрмелле. Торта сивĕтмĕше лартмалла.

## Маринадланă пăрăç

**1,5 килограмм пылак пăрăç, 300 миллилитр тип çу, 100 миллилитр уксус, 0,5 стакан сахăр, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 литр шыв кирлĕ.**

Вăрринчен тасатнă пăрăçа 4 пая касмалла, кастрюльте 20 минут пĕçермелле. Унтан пахча çимĕçе стерилизациленĕ банкăна тултармалла.

Вĕрекен шыва тип çу, тăвар, сахăр уксус ямалла. Маринада банкăна ямалла.

СЫВЛĂХ

## Эмел вырăнне – коктейль

Çулсем иртнĕ май нумайăшĕ çывăрайманнипе асапланать. Эмел вырăнне ятарлă коктейль ĕçни пулăшать. 1 банан, 6-7 çĕр çырли, 1 апат кашăкĕ соя тăпăрчи илсе вĕтетмелле, 1 стакан сĕт тата 1 çăмарта хушмалла. Лăкамалла, çывăрма выртиччен çур сехет маларах ĕçмелле.

## Гастритран – пилеш

Гастрит аптратсан 1-2 апат кашăкĕ çырлана тӳмелле, 1 стакан вĕри шыва ямалла. 4 сехет лартмалла. Апат умĕн çуршар стакан ĕçмелле.

Юн пусăмĕ тăтăшах виçерен ӳссен 100 грамм пилеше тӳмелле те 100 грамм пылпа хутăштармалла. Эрне лартмалла. Кашни ир выçă хырăмла пĕрер апат кашăкĕ çимелле.

Кăмăл пĕрмай пăсăлсан 2 апат кашăкĕ çырлана çур стакан вĕри шывпа, 1 лимон сĕткенĕпе пăтратмалла. 2 сехет лартмалла. Кунне виçĕ хутчен пылпа 4-шар чей кашăкĕ ĕçмелле.

## Пуç ыратнинчен – сар çип ути

Пуç ыратсан сар çип утинчен хатĕрленĕ /ваннăна 2 стакан çирĕп хутăш ямалла/ ванна кĕмелле. Е урана 10-15 минут вĕри шывра тытмалла.

Шăл сурсан ун çумĕнче пиçмен хĕрлĕ кăшман татăкĕ тытмалла.

Вар-хырăм ыратсан пĕр ывăç пĕтнĕк курăкĕпе салтак тӳми ямалла, пăс çинче ăшăтмалла та 15-20 минутлăха хырăм çине хумалла.

ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Пӳлĕмри чечексем

Кĕркунне пӳлĕмри чечексене шăварас, апатлантарас йĕрке улшăнать. Ку вăхăтра ӳсен-тăран ытлашши типсех каймасть.

Чечек çураканнисене сахалрах шăварма тивет. Пĕтĕмпех çанталăкран килет. Урамра тата килте мĕн чухлĕ сивĕрех – шыв çавăн чухлĕ сахалрах кирлĕ.

Кил-çурта хутма тытăнсан чечек çулçисене нӳрĕк кирлĕ. Çавăнпа та вĕсене час-часах шывпа пĕрĕхтермелле. Шыв юратаканнисен тĕпне тулли чашăк лартмалла. Сахалрах шăварма тытăннă май, кая юлса е хĕлле чечек çураканнисемсĕр пуçне, апатлантару виçине те чакармалла.

# Йăлтăркка çулçă вăрттăнлăхĕ

Сарлака çулçăллă ӳсен-тăрана тасатсах тăмалла. Унсăр пуçне чечек çулçине çакнашкал шĕвекпе пĕрĕхме юрать. 1 литр вĕри шыва 3-4 тумлам камфара, 1 таблетка аскорбинка йӳçекĕ ямалла. Çак хутăша пульверизаторпа сирпĕтмелле. Çакăн хыççăн çулçă çуталать тата йăлтăртатма пуçлать. Ку ĕçе каçхине е ирхине тумалла, унсăрăн çулçă хĕвелпе пиçсе кайĕ.

# Вĕтĕ шăна тапăнсан

Эпĕ сăнанă тăрăх – вĕтĕ шăна пӳлĕмри кĕл чечеке ытларах килĕштерет. Эпĕ ăна табакпа пĕтеретĕп. Паллах, лавккаран чи йӳннине туянатăп. Ăна каçхине тăпра çине сапатăп. Витĕмлерех пултăр тесе ӳсен-тăрана ирчен полиэтилен çатăркапа хупламалла.

**Мария СТЕПАНОВА.**

ЧУНРИ

# Малтанхи упăшка авланасшăн

Упăшкаран нимĕншĕн те мар, ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн уйрăлтăм. Киле укçа илсе килми пулчĕ. Мĕн пуррине те тепĕр кунне мухмăр чĕртме пытарса хуратчĕ. Обой хушшинчен, диван хушăкĕнчен хушăран çĕршер, пилĕк çĕршер тенкĕ тупкалаттăм. Юлашкинчен ĕçлеме те пăрахрĕ. Ўсĕрле хăй мĕн хăтланнине те пĕлместчĕ, урălсан ас тумастчĕ. Ним çукран алă çĕклеме те пултаратчĕ. «Уйрăл унран, путсĕрпе çавах пурнăç тăваймастăн. Малтанлăха пĕччен йывăртарах пулĕ, кайран хăнăхатăн. Çамрăк-ха халь, кайран урăх мăшăр та тупăн», – тетчĕç пĕрмай подъезд умĕнчи сак çинче хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчесе ларакан кинемисем. Çук, çемьене упрас, ачана ашшĕсĕр пăрахса хăварас мар тесе чăтрăм, вĕсен сăмахне хăлхана та чикмерĕм. Хуняма та харам пыр ывăлĕнчен ывăнсах çитрĕ. «Чĕре хурчĕ вăл. Ĕмĕр тăршшĕ юнна ĕмсе пурăнĕ. Чăн-чăн ашшĕ. Уйрăл, мăнука хамăр май пур таран пулăшăпăр», – терĕ мана шеллесе.

Юратнă хуняман сăмахĕсем те витĕм кӳчĕç-ши, юлашкинчен чăтăмлăх пĕтрĕ. Пăнчă лартма шухăшларăм. Ултă çул пĕрле кун кунланă упăшкаран хутпах уйрăлтăм. Хваттере те улăштартăм. Ачапа лăпкăн та канлĕн пурăнасси нумая пымарĕ. Шупашкар пысăках мар çав, хайхимайхи хăвăртах шыраса тупрĕ мана. Кашни кун хыçран йĕрлесе çӳреме пуçларĕ. Çакăн чухне чăн-чăн тамăк пуçланчĕ те. Ун пек çынсенчен уйрăлса пĕтме те çук тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Ĕçре те, алăк, подъезд умĕнче те сыхлатчĕ мана. Лавккана, аптекăна кайсан та çула пӳлетчĕ. Халь тĕпĕ-йĕрĕпех асăнас та килмест, мĕн тĕрлĕ кăна сăтăр тумастчĕ-ши тата? Полици ĕçченĕсем те ывăнса çитнĕччĕ унран.

Эпĕ тепре çемье çавăрсан тин хăпрĕ манран. Хулара ниçта пурăнма çуккипе ирĕксĕрех яла пăрахса кайрĕ. Тара тытса пурăнма укçи çук. Эпĕ хам ĕнсе çинчен тахçанах сĕтĕрсе антартăм. Ăçта каяйтăр ĕнтĕ, ашшĕпе амăшĕ патĕнче тĕпленчĕ. Пĕр лайăх енĕ пурччĕ унăн. Хĕрарăмсемпе тарăхтарса курман вăл мана. Вĕсем патне чупма паллах укçи те пулман. Теприсем ĕçкĕпе иртĕхсен те хăйсем пеккисене тупаççĕ-ха. Пилĕк çул пĕччĕнех пурăнчĕ. Паян вара малтанхи упăшка ачаллă хĕрарăм тупни пирки пĕлтĕм. Тинех иккен! Мĕн тери хĕпĕртерĕм. Авланса пурăннине нимĕн те çитмест. Тен, ĕçме те пăрахĕ? Хама миçе çул тарăхтарнине мантăм-ши, пĕр енчен шел те ăна. Пĕччен мĕн пурнăçĕ ĕнтĕ? Аякра ĕçлесе килнĕ укçине пĕр-ик кунра ĕçсе, çухатса пĕтерет те кайран ял тăрăх мухмăр чĕртме каять. Пĕрисене сысна пусса пулăшать, теприсен утти-улăмне купалать… Каçа каллех ӳсĕр.

Малтанхи упăшкана хам пекех телейлĕ курас килет ман. Кирек мĕнле пулсан та, ача ашшĕ-çке… Эрех кĕленчи çинчен яланлăхах манса кайсан çемьепе пурăнса кайма пултарĕ. Урăлла усал мар вăл. Кахал та мар, алли те çыпăçуллă. Ан ĕçтĕрччĕ кăна.

**ТАТЬЯНА.**
Шупашкар районĕ.

# Шухăшпа та улăштармăп

Пĕр уйăх пĕр-пĕрне курман. Шухăшласан ытла нумаях та мар пек. Анчах та юратакансемшĕн пĕр сехет те ĕмĕре тăсăлнăн туйăнать теççĕ. Тĕрĕсех иккен. Ир те каç ман асăмран тухмарăн. Çывăрма выртсан та ыйхă таçта вĕçетчĕ. Эсĕ маншăн мĕн тери хаклă та çывăх иккенне санран аякра чухне тата лайăххах ăнланса илтĕм. Тунсăхлама паманнишĕн тем пек тав сана. «Эсĕ кăна ман чĕрере», – тесе çырнă кĕске çырусем çунат хушса малалла пурăнма хавхалантаратчĕç. Мана калама çук йывăр чухне кашни сехетрен шăнкăравласа тăтăн.

Пĕр-пĕрне нумай вăхăт курманнипе туйăмсем тата вĕриленнĕрен ура çĕр çине лекнине те туймастăп халь. Чунтан савакан, темле йывăр самантра та ал паракан çын юнашар пулни мĕн тери аван иккен. Этемлĕхĕн черчен çуррине тата урăх мĕн кирлĕ? Çук, çук, ман чĕрене канăç паманни айккинчи темле юрату мар. Савнă мăшăр çаплах пăлхатать чунăма. Çак çĕр çине пĕрпĕрин валлиех килнĕ пуль çав эпир. Пилĕк çул пĕрле пулин те пирĕн хутшăнусем тин çеç паллашнă чухнехи пекех. Упăшка уяв кунĕсене кĕтмест, сăлтавсăрах чечек çыххи парнелет. Вăл маншăн хăвăрт тунсăхлать, лавккасем тăрăх кайсан та çухатать. Йăлăхтармăш ахаль кунсене юмаха çаврăма пĕлнишĕн тата ытларах юрататăп ăна. Кану кунĕсенче те килте кичемленсе ларма памасть. Кинона та тăтăшах çавăтăнса утатпăр. Ĕçрен ывăнса килнине сиссен çемйипех кафене апатланма илсе каять.

«Сан мăшăр пеккине çĕр çул шырасан та тупма çук. Аçу пекех вăл. Упра эс ăна», – ăс парать çак çĕр çинче нумай пурăнса курнă анне.

Нумай пулмасть хут ĕçĕпе пĕр кантура кĕрсе тухнăччĕ. Хуçана телефон номерĕ те парса хăварма тӳр килчĕ. Документ çинче тӳрлетмелли пур тесе тепĕр кунне каллех хăй патне чĕнтерчĕ. Чей ĕçмешкĕн хистесех сĕтел хушшине лартрĕ. Тухса кайнă чухне чеен те пулин эпĕ ăна питĕ килĕшнине систерчĕ. Çав кунрапа кашни кунах шăнкăравламалли сăлтав тупать. Эпĕ мăшăрли те нимех те мар уншăн. Çук, çук, еплеха капла? Айккинчи юрату пуçа ниепле вырнаçмасть. Шухăшланипе те пит хĕрелет те, ăçта унпа пуçа çухатасла савăшма. Тем тесен те ман валли мар. Ылтăн айне тусан та урăххи кирлĕ мар. Эпĕ хамăн мăшăра шухăшпа та улăштараймăп. Тĕлĕке те юттине кĕртмĕп. Упăшка пур çинчех теприн вĕри ытамне лекнине ăнланма та пултараймастăп. Кайран савнăскерĕн куçĕнчен епле пăхас? Вăл мана урăххисемпе улталанине сиссен те çак утăма тумăп. Айăпа кĕрсен те каçараятăп ăна. Еркĕнпе юрату вăййи выляссинчен турă сыхлатăрччĕ мана. Çук, никама та мар, мăшăрăма кăна юрататăп эпĕ. Çакă нимрен хаклă.

**АЛЕНА.**
Шупашкар хули.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Манран вăрттăн…

"Ан кай…" – çаплипех янăрарĕç хăлхара унăн сăмахĕсем. Эпĕ вара çаврăнса пăхмасăр куççуле пытарса чупрăм. Тен, самантлăх чарăнса тăмаллаччĕ? Вăл, паллах, ыталаса лăплантарма тăрăшĕччĕ.

Автомашина салонне хĕрарăмсем аялти кĕпе-йĕме мĕнле майпа манса хăварма пултарнине ниепле те ăнкараймастăп. Киле çав териех васкаççĕ-ши? Хыçалти ларкăч çине вырнаçман пулсассăн, тен, куçа йăмăхтаракан хĕрлĕ çав япаласене асăрхамăттăм. Чун çунтармăшпа юнашар йăл-ял çиçсе ларăттăм, юрату çинчен калаçăттăм. Ах, анчах пирĕн хушша виççĕмĕшĕ тăрасса шухăшлама та пултарайман. Е пĕр каçлăх савни тупнă-ши вăл? Манран вăрттăн…



Чарăнури сак çинче вăрах ларăни? Анчах халĕ мĕн тумалла? Савнипе иксĕмĕрĕн ĕçтешĕн çуралнă кунне каймаллаччĕ – кăмăл пусăрăнчĕк. Çула май пысăк организацийĕн хуçипе кафере тĕл пулса килĕшӳ алă пусмаллаччĕ – ĕлкĕреймерĕм. Вăл унтах кĕтет ахăр. Арçын халь-халь шăнкăравлама пуçлĕ. Хайхискер мана килĕштернине тахçанах палăртнă. Ĕçлĕ тĕл пулусенче чечек çыххисем парнелет. Уявсемпе саламлама май тупать. Хăй каланă тăрăх – маншăнах "Утмăл турат" фирмăпа çыхăну тытать. Урăх хĕр-хĕрарăм сахал-и ун валли? Пĕрре кĕрĕк туянса пама сĕннĕччĕ. Уншăн укçа хут татăкĕ вырăнĕнче пулнине чухлатăп. Анчах чăн туйăма нухратпа илме çук вĕт. Эпир савнипе иксĕмĕр, кредит илсе хваттер туянма хатĕрленекенскерсем, кашни тенке перекетлеттĕмĕр. Кафе-ресторана та тăтăш кайман. Хамах тутлă пĕçеретĕп. Çыхма та, çĕлеме те ăста. Паянччен хама çав тери телейлĕ туяттăм. Пĕр самант та чуна пушатма пултарать иккен. Хампа хуçа мар тейĕн – куççуле чарăймастăп. Ĕмĕт хăмпă евĕр çурăлса çухалнăн туйăнать. Акă телефон шăнкăртатать. Савни… Хама алла илмелле, унсăрăн калаçу йĕркелеймĕн. Каçарма пулатьши ăна?

"Мĕншĕн шанмастăн? Пирĕн халех тĕл пулмалла…" – илтĕнет унăн çепĕç сасси. Тархасласа каялла таврăнма ыйтать. Тем каласшăн хăй. Маншăн та çакă нимрен пĕлтерĕшлĕ.

Унăн куçĕнчен пăхмасăр автомашинăран тухнăшăн та ӳкĕнетĕп. Ларутăрăва халех усăмлатмалла.

"Ĕнер юлташсемпе пулла кайнăччĕ. Эсĕ вара çула тухма килĕшмерĕн. Юхан шыв хĕррине автомашинăна питĕрмен. Кăвайт умĕнче ăшăнайманнисем салона кĕрсе ларчĕç. Камăн япалисем юлнă – пĕлместĕп", – ăнлантарать хайхискер. Ĕнентĕм. Тепĕр тесен, унран юлмалла пулман – çакнашкал пăтăрмах та сиксе тухмастчĕ. Йăлтах йĕркеленчĕ.

Унчен те пулмарĕ пысăк предприяти хуçи ĕç пирки шăнкăравларĕ. Ятлаçать хăй. Ĕнер те çав килĕшӳсене пулах савнипе тĕл пулаймарăм. "Каçарăр, Сергей Леонидович, ыран ĕç вăхăтĕнче офиса кĕрсе тухăп", – палăртрăм кĕскен. Вăл хирĕçлеме те ĕлкĕреймерĕ.

Савни ыталасан мĕншĕн çав тери лăпкă-ши? Пĕр унăн ăшшине çеç чун туять.

**Елена ЦВЕТКОВА.**

Альбина ИСЕМПИ

# Космонавт

Калав



И.АЛЕКСЕЕВ ӳкерчӗкӗ.

– Чунӑмҫӑм, чӗкеҫӗм эсӗ, мӑшӑрӑм. Галарӑм-ҫке сана ывӑл ҫуралать пирӗн тесе. Хӑҫан йӑнӑшнӑ эпӗ? Нихӑҫан та! Эсӗ те пултарулла, Катюша, маххӑ памастӑн, – хавасланса мӑнаҫлӑн калаҫать Тимуш. Унтан ытарайми пепки ҫине пӑхса илет. – Ахальтен мар пулӗ Космонавтика кунӗнче сас пачӗ ҫак «шӑхлич». Катерина, атя мухтавлӑ ентешӗмӗре Николаев космонавта халалласа Андрей ят хуратпӑр ӑна. Килӗшетӗн-и, чиперукӑм?

– Хаваспах, – йӑл кулчӗ ҫамрӑк хӗрарӑм, – анчах мӗншӗн Андриян мар?

– Апла та юрать, эпӗ хирӗҫ мар. Андрияна тус-юлташӗсем, космонавтсем пурте Андрей тесе чӗннӗ. Аванҫке, ҫапла вӗт?

– Юрӗ, Андрей тейӗпӗр.

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫуллӑ, туслӑ ҫемьере вӑй илсе хӑвӑрт ҫитӗнчӗ ҫурхи пӗчӗк кайӑк. Мӗн тӑвӑн, вӑхӑчӗ те юмахри пек сисӗнмесӗр вӗҫет ҫав...

Килти мотоцикла куҫланӑ шӑпӑрлан пӗрмай ашшӗпе руль умне ларма ӑнтӑлать, техника патне туртӑнать. Пусӗнче яланах хӗрлӗ пысӑк шлем унӑн, ҫывӑрас умӗн ҫеҫ хывать пулӗ ӑна, чӑн та.

Пӗррехинче ашшӗ виҫӗ кустӑрмаллӑ велосипед туянчӗ тӗпренчӗкӗ валли. Ахальли мар – ракетӑлли! Чӑваш космонавчӗ уҫлӑха вӗҫнӗ карап ячӗллӗскер тата. «Восток-3»!

Акӑ ешӗл курӑклӑ урамра велосипедпа пӗр ача вӗҫтерсе пырать. Кӑвак комбинезонлӑ, сӑран перчеткеллӗ хӑй. Хӗрлӗ калпакӗ, аслӑскер, куҫ ҫине ана-ана ларать те ирӗксӗрех пуҫа каҫӑртса тинкерме тивет руле ҫатӑрланӑскерӗн. Ҫавӑн пек курма хӑнӑхнӑ ӑна кунсерен ял-йыш. Кӑштахран вара сӑмахӗ те тупӑнчӗ ракетӑлли валли: Космонавт.

– Трррр-нн! Трн-трнн! Пи-пик! Пӑрӑнӑр! – ҫул пама ыйтать вичкӗн куҫ. Ӑна инҫетренех палланисем: «Космонавт килет! Кӗтсе илӗр!» – хавхалантараҫҫӗ тимӗр ут хуҫине.

– Пӗтрӗм ӗнтӗ, ан тапта-ха, Энтрей. Ай турах, ытла хытӑ кӗрлет-ҫке машину, – васкаса пӑрӑнчӗ тулли ҫӗклемлӗ Акниш аппа. – Ӑҫталла кӗмсӗртеттеретӗн-ха, мӑкка, кукаму патне мар пулӗ те?

– Унта ҫитме бензин нумай кирлӗ ҫав. Мехпарка кукаҫи патне кайса тултарасшӑн-ха. Фу-у, ывӑнтӑм. Канам-ха.

– Ҫапла пулмасӑр, ачамккӑ. Машина бензинсӑр чӑхӑмлать ҫав. Этемӗн те вӑй пӗтет апат ҫимесен. Эсӗ, Энтрей, яшка ытларах ҫи. Ҫӑрине.

– Ҫӑмах яшки ҫиекенччӗ-ха эпӗ. Аш та юрататӑп.

– Маттур. Вӑйлӑ, ҫирӗп сывлӑхлӑ пулатӑн лайӑх ҫисен. Ахальтен Космонавт темеҫҫӗ вӗт сана.

Андрей кӗрлеттерсе ҫитнӗ ҫӗре Уҫтин аппа кӗлетре кӑштӑртататчӗ. Миҫе ҫул ҫамрӑкланать-ши мӑнукне курмассерен мӑнтарӑн кинемейӗ! Ӑшӑ кулӑллӑ сӑн-питре савӑнӑҫ ҫиҫет, чун-чӗрере иксӗлми телей. Кӗҫӗн класра вӗренекенсене пӗлӳ панӑскер ачасемпе самантрах пӗр чӗлхе тупать. Чунне пама хатӗр вӗсемшӗн.

– Ай-уй, чӑмӑрккамҫӑм килчӗ, – хавасланчӗ вашаватскер ку хутӗнче те. Аллинчи кивӗ ҫӑпатана хурса ачана ыталарӗ.

– Мӗн ку? – пӗлесшӗн пулчӗ пӗчӗкки. – Вӑрӑм хӳрелле йӗке хӳре тейӗн.

– Ҫӑпата вӑл, кукаҫу калӑпланӑскер. Асӑнмалӑх упратӑп. Халӗ пурнӑҫ лайӑх, пурте сӑран атӑ-пушмак тӑхӑнатпӑр. Апла пулин те манӑҫмасть маншӑн нушаллӑ ҫӑпата. Пурнӑҫ утти вӑл. Тумхахлӑ пурнӑҫ ҫулӗн ҫӑлӑнӑҫӗ.

– Пуҫӗ виҫӗ кӗтеслӗ, кантрисем вӑрӑм.

– Урана тӑхӑнсан пакӑлчакран ҫӳлерех кантра сырнӑ. Санӑн кукаҫу та, мӑн асаҫупа мӑн асанну те – пурте мӗн ватӑличчен ҫӳренӗ ҫав «ҫӑмӑл урапа». Хӗлӗн-ҫӑвӗн. Питӗ кирлӗ пулнӑ пирӗн вӑхӑтра вӑл. Пӗлессӳ килет тӗк пулас космонавт Андриян Николаев та шкула, техникума ҫӑпатапа чупнӑ. Иккӗмӗш курсра чухне ҫӑпати ҫӗтӗлсе тухнӑ та техникума икӗ эрне ҫара уран ҫӳреме тивнӗ унӑн. Шухӑскер пур пӗр май тупнӑ тӑхӑнмалли туянмашкӑн: хӑйсене канфет /кӑнтти тенӗ ун чухне/ илме панӑ карточкӑпа усӑ курма шухӑшланӑ. Анчах ӗмӗте пурнӑҫа кӗртме укҫа ҫукки чӑрмантарнӑ-ҫке. Ырӑ кӑмӑллӑ юлташӗ ӑна инкекре пулӑшнӑ – укҫа панӑ, Андриян карточкӑпа канфет илнӗ. Пӗрне ҫеҫ ҫисе пӑхнӑ ҫав вӑл, ыттине нуша суттарнӑ. Мӗн тӑвӑн? Хырӑм та выҫӑ, укҫа та кирлӗ. Лавккара хаксем пӗр тӗрлӗ, пасарта – тата урӑхла. Хаклӑрах сутса ача икӗ пашалу илнӗ, юлашки укҫипе тапӑчки туяннӑ. Урамра урине ҫуса ҫӗнӗ тапӑчки тӑхӑннӑ. Ҫутӑ ӗмӗтлӗскер! Мӗн тери хӗпӗртенӗ вӑл уншӑн!

Кирек мӗнле йывӑрлӑха ҫӗнтерме пултарнӑ чӑваш ачи. Космонавт пулчӗ! Ҫирӗп те маттурскер тӗнче уҫлӑхне ҫӗкленчӗ. Вӑт сана ҫӑпаталлӑ Андриян! Эсӗ те, Андрей, унран юлмастӑн пулӗ-ха?

– Кукамай, ҫӑпата сырса кӑтартсамччӗ. Питӗ вӗренес килет манӑн.

– Юрӗ. Эпӗ ҫиччас, – тесе кӗлете васкарӗ ватти. Кӑштахран чӑваш тӗррипе илемлетнӗ, аркӑллӑ кӗпеллӗ, чечеклӗ тутӑрлӑ Уҫтин аппа курӑнчӗ кил хушшинче. Вӑл шурӑ ҫӑм чӑлхаллӑ урине ҫӑпата сырчӗ те икӗ аллине пилӗкӗ ҫине тытса урине йӑкӑш-йӑкӑш шутарса такмакларӗ:

Пуйӑс килет, пуйӑс килет –
Вун ик урапаллӑ,
Савни килет, савни килет –
Ҫӗтӗк ҫӑпаталлӑ.

Пӗр тӗлӗнсе, пӗр савӑнса пӑхрӗ хаваслӑ кукамӑшӗ ҫине мӑнукӗ.

– Мӗнле хитре эсӗ, кукамай.

Арчара упранакан ӗлӗкхи асамлӑх тыткӑнларӗ тейӗн пӗчӗкскере, тепӗр кун та кӗлет патӗнчех тӑрмашрӗ вӑл. Ҫӑпатапа аппаланма пӑрахмарӗ. Ури таврра явса турткалать те турткалать кантрана.

– Пушӑт пушмак кӑмӑла кайрӗ-им? – сӑмах хушмасӑр чӑтаймарӗ Уҫтин аппа.

– Эпӗ те космонавт пуласшӑн. Сырма пулӑш-ха, кукамай, тепрехинче хамах май килтерӗп.

– Хаваспах пулӑшатӑп, ҫӑлтӑрӑм. Тен, пӗчӗк ҫӑпата туса парас сана? Пушӑт ҫаплипех выртать кӗлетре. Шӗшли вара нихӑҫан та тӗксӗмленмест пулӗ, кукаҫу ҫӑпата хуҫнӑ чухнехи пекех халӗ те ҫап-ҫутӑ.

– Ҫӑпата тума та пӗлетӗн-и? Апла халех пуҫлар пуль? Кунпа эпӗ чупаймастӑп. Хатӗрӗсем пурте пур терӗн вӗт, кукамай.

– Чим-ха, чӗппӗм, ан васка. Паяныранах пуҫӑнаймӑпӑр ку пысӑк ӗҫе. Тӑхтас пулать. Эсӗ чӑтӑмлӑ вӗт? Чӑтӑмлӑ. Ҫӗнӗ пушӑт хатӗрлесе илемлӗ ҫӑпата тӑвӑпӑр. Ӑна валли ешӗл ҫамрӑк ҫӑка хуппине хӑйпӑтмалла. Ҫура-ҫура ҫыхса хумалла та типсе сараличчен кӗтмелле. Ну, мӗнле?

– Кӗтетӗп, кӗтетӗп.

– Маттур. Кӗтме те тӳсӗм кирлӗ, ывӑлӑм. Тар юхтармасӑр ҫӑпата та тӑваймастӑн, космонавт та пулаймастӑн. Андрей, илсе килсем кӗлетри пушӑт ҫыххине. Ҫӑпата еплерех тумаллине кӑтартас тетӗп-ҫке сана. Хатӗрӗсемпе те паллашар. Алӑк тӑрринчен илем-ха вӗсене. Ку – йывӑҫ калӑп: пӗр пуҫӗ виҫӗ кӗтеслӗ, тепри тӑватӑ кӗтеслӗ. Авӑрли, ҫӗҫӗ евӗрли – шӗшлӗ. Пӑх-ха, тимӗрӗ авӑнчӑк, «курпунлӑ». «Курпун сысна йӗр йӗрлет» тупмалли юмах тупсӑмне пӗлетӗн-и?

– Шӗшлӗ пулӗ? – иккӗленчӗ ача.

– Тӗрӗс. Анчах унпа каярах усӑ курас пулать. Малтан кантралӑх хатӗрлемелле. Пушӑт хӗррисене ҫапла касатпӑр та юлашкийӗсенчен кантра яватпӑр. Ак ҫак ҫӑпатанни пек ӗнтӗ. Сӳсрен те юрать. Кантрана чӗркуҫҫи тӗлне ҫавӑрса ҫыхса унта йӗркипе пилӗк е ҫичӗ пушӑт хӗстермелле. Вӗсене /малалла-каялла/ черетпе ылмаштарса пырсан шахмат хӑми тӑваткалӗсем пек ретсем пулаҫҫӗ. ҫӑпата пичӗ хатӗр. Унтан пушӑтсене кӗли патне ҫити явмалла. Кантра пушӑт айне юлать. Ҫиеле ҫичӗ пушӑт хурса кӗле ҫыхмалла. Калӑп тӑхӑнтартнӑ хыҫҫӑн шӗшлӗпе ӗҫле те ӗҫле.

– Ну, кукамай, паянтан ҫӑпатапа ҫӳреме пуҫлатӑп, ҫӗтӗлмесӗр те пӑрахмастӑп ӑна. Чӑн-чӑн космонавт пулатӑп.

Ҫав самантра ҫӑпаталлӑ Космонавт лап-лап! утрӗ те юрласа ячӗ:

Утӑм хыҫҫӑн тепӗр утӑм
Пирӗн тумалла,
Уйӑх ҫинчен ҫӑлтӑр ҫине
Ҫитсе курмалла.
Ӑс-тӑна кунран-кунах туптар,
Харсӑр, ҫирӗп космонавт пулар.

Чӑн та, сӑмахӗнчен пӑрӑнмарӗ Андрей, куҫ илми сӑнарӗ кукамӑшӗ ҫӑпата тунине, хӑй те пӗрле тӑрмашрӗ. Пушӑта шӗшлӗпе тӑваткӑллама вӗренчӗ-вӗренчех ӑшталанӑкскер. Сарӑ «ҫӑмӑл урине» сырать те кӑвак комбинезонпа сӑран перчеткине тӑхӑнса юратнӑ «Восток-3» ҫине вырнаҫать. Ылтӑн хӗвел пайӑркисем ачашшӑн сӗртӗнсе саламлаҫҫӗ ӑна. Йӑлтӑр-йӑлтӑр ҫуталать хӗрлӗ ҫӗнӗ шлем. Ҫапла ҫула тухать кунсерен канӑҫсӑр кӑйкӑр.

«Ҫине тӑраканскер», – савӑнаҫҫӗ ашшӗпе амӑшӗ ывӑлӗшӗн. Ахальтен мар. Сӑмаха ҫирӗп тытса ӗмӗтне пурнӑҫлакан – чӑн-чӑн паттӑр, пурнӑҫ ҫынни. Халлӗхе... ҫавӑр та ҫавӑр педале, пӗчӗк космонавт.

## СӐВӐ СӖВЕМӖ

Николай ТЕВЕТКЕЛ

* * *

Ҫил-тӑвӑллӑ вӑрман – пӑлханнӑ океан.
Ак – тӑххӑрмӗш кисрев, ак – ҫухату,
ак – шанчӑк.
Вӑл ҫул ҫине тухсан, ҫын шӑпипе
вылянчӑк,
кунта ҫын – хӑй карап, хӑех вӑл капитан.

Ҫӗрле. Кӗрлет тавра. Пӗр ҫӑлтӑр ҫеҫ
пулсанччӗ,
вара этем-карап ҫул пӗлӗччӗ унран.
Ҫак самантра малта пӗр-пӗр ҫутта курсан,
Колумб ҫӗр тупнӑ пек, вӑл тӑрӗ хавхаланчӑк.

Ҫапла этем тени – хӑйне шырать, тӗпчет:
ҫӗрпе те канашлать, ҫитет ҫӳл тӳпене те...
Тупать е ҫухатать – вӑл уншӑн ӳкӗнет-и?

Вӑл шанчӑк парӑсне ҫӳлтен ҫӳле ҫӗклет:
ҫын – парӑнман карап – хӑй хыҫҫӑн
йӗр хӑварӗ,
лӑскать ӑна кун-ҫул, касать ҫулсен тӑварӗ.

* * *

«Сив ютшӑну ытамӗнче ан лар.
Атя, каллех пӗрле юрлар, кулар.
Ташлар туссен ҫуралнӑ кунӗнче,
сив ютшӑну ан юлтӑр питсенче», –
ҫакна самант эп калӑттӑм сана
юрра хывса шӑнкрав пек сассуна.
Анчах чӗре – тӗлӗнмелле кӗсле –
хӑй кӗввине каласшӑн мар тепре.
Хӑй кӗввине савман этемпеле
вӑл уйрӑласшӑн тӳсӗмлӗн, хитре.

АЛЕКСАНДР АРТЕМЬЕВ: 90 ÇУЛ

# Выçă пурăнсан та... купăс сутман



Пурăннă тăк авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев 90 çул тултармаллаччĕ. Вăл Элĕк районĕнчи Тури Вылăра çуралса ӳснĕ. Эпир унпа урам урлă кăна пурăнаттăмăр. Ял çумĕпе юхакан Выла шывĕ хĕрринче вылянă, кулнă, шӳтленĕ. Эпĕ Саньккаран /ялта ăна çапла чĕннĕ/ 15 çул кĕçĕнрех пулнă. Çапах та калаçнисем асрах. Нумаях хутшăнайман çав, вăтаннă эпир, пĕчĕк ачасем, пиччерен. Пур пĕрех нумай самант асра юлнă. Аттен пиччĕшĕ Иосиф Яковлевич Етĕрнери педтехникумран вĕренсе тухнă. Чылай вăхăт шкулта, унтан инспекторта ĕçленĕ. Йывăр чире пула 1938 çулта çĕре кĕнĕ. Хăй çинчен ырă ят хăварнă. Педтехникумра вĕреннĕ чухне вĕсене мандолина, сĕрме купăс калама вĕрентнĕ. Кӳршĕ ачине Санькkана та мандолина парнеленĕ вăл. Пирĕн атте Иван Яковлевич купăс ăста каланă, Коля пичче те ăна алăран яман.

Александр Артемьевăн "Салампи" романĕнчи Коля "На сопках Маньчжурии" вальс шăрантарать. Унта писатель ман пиччене сăнланă. Александр Артемьев купăс каланине манăн аппа Раиса Дубровская аса илнĕччĕ. "Эпĕ алăк патĕнче çывăраттăм. Вăйă салансан картишне тухса купăс тăсса яратчĕ вăл. Каçхи шăплăхра илемлĕ кĕвĕ янăратчĕ. Кам вĕрентнĕ-ши ăна? Халĕ ăна пĕлекен юлманпа пĕрех. Эпир ача пулнă.

Александр Артемьев хитре юрланă. Унăн сăввисене юрра хывнă. "Çӳл тӳпере çич çăлтăр..." – ас тăватăр-и "Салампири" йĕркесене. Чăваш халăхĕшĕн юрă – чун уççи.

Купăс калакан та нумай пулнă ялсенче. Халĕ те сахалăн мар. Никифор Ваçанкка поэт, тĕслĕхрен, Элĕк районĕнчи Ураскилтре çуралса ӳснĕскер, купăс каламасăр пурăнман та пулĕ. Шупашкарта, пасар патĕнчи урамра пурăннă чухне, чӳрече уçса купăс калатчĕ теççĕ. Урамри ача-пăча пуçтарăнса итленĕ.

Александр Спиридонович та купăсран уйрăлман. Кашни хайлавĕнчех ун çинчен çырнине вулатпăр. "Миршĕн" калавах илер-ха. Пĕр ялта ӳснĕ Петĕрпе Санькка тантăшĕпе вăрçă хирĕнче калаçаççĕ. "Сахал пурăннă-ха эпир тĕнчере, пирĕн çав тери пурăнас, ĕçлес, вĕренес, юратас килет! Хамăр ăçта ларнине те мансах эпир çĕнтерӳ хыççăн мĕнле ырă пурнăç пуласса ĕмĕтленетпĕр", – ассăн сывлать Петĕр. Вăрçăччен улахра, вăйăра хĕрсемпе каччăсене ташлаттарса юрлаттарнă вăл. Пĕр çапăçура нимĕç танкĕ Петĕр урлах каçса каять. Санькка куç умĕнчех пурнăçран уйрăлать çамрăк.

Александр Спиридонович вăрçă хыççăн Петĕрĕн купăсне амăшĕ тирпейлĕ упрани çинчен çырса кăтартать. Юратнă хĕрĕн шурă тутăрĕпе витеççĕ çак килте ăна.

"Симĕс ылтăн" повеçе те хумханмасăр вулама çук. Унăн кашни хайлавĕнчех – купăс сасси. 1968 çулта пичетленнĕ "Ирхи çăлтăрсем" повеçне вулар-ха. Çирĕм ултă çулти Актаев тăван яла таврăнать. Ăна нумай асаплантарнă. "Тыткăнра пуласси тамăка чĕр хальлĕн кураcси", – тенĕ çав ватăсем. Амăшĕпе калаçать Валентин ывăлĕ. Йывăр пурнăç, пур-çук япаласене сутма тивнĕ...

– Манăн баяна та сутрăн-и, анне?

– У-уй, мĕн калаçан, ачам! Мĕнле аллăм çĕклентĕр ăна сутма? Ав, арчарах ларать. Куç пек упраса усрарăм, тусан та ларман ун çине. Ăна курсан хăвна курнăнах туйăнать. Туянас текен нумайччĕ. Халĕ, вăрçă пĕтсен, хамăр клуб валли питĕ илесшĕнччĕ те – яхăнне те ямарăм. "Валентин килсен мĕн калĕ мана?" – терĕм.

"Нина эпĕ баян каланине итлеме юрататчĕ", – чунне ырattарса аса илчĕ те каччă баяна каллех тутăрпа витрĕ.

– Тусан та лартман, çынна та тыттарман, – терĕ амăшĕ.

Санькка кӳрши Валентин калани асрах. Ашшĕ çыру янă: "Эпĕ аманнă хыççăн госпитальте выртрăм. Сывалтăм. Паян аманнă Санькkана килсе пăрахрĕç. Эпĕ çапăçăва каятăп. Санькка вырtса юлчĕ". Анне ялан аттен юлашки çырăвне пăхмасăр калатчĕ.

Атте Беларуç çĕрĕнче пуç хунă. Купăс сасси янрасассăн пурăнас килет çав. Санькка чиперех таврăнчĕ тăван яла. Пурнăçа юратнă вĕсем, çĕнтерӳçĕ салтаксем. Ăçта-ши, камра-ши халĕ Александр Спиридоновичăн купăсĕ? Эх, унăн сасси янратăрччĕ...

**Борис БОРИСОВ.**
Элĕк районĕ,
Тури Вылă ялĕ.

ШĂПА

# "Телейлĕ-и эсĕ, чунăм?.."

– Хĕрӳ хăв пекех правур, пур ĕçре те çыпăçуллă, савăнса çеç пурăнмалла санăн. Эх, кама каччă кайса ырă кăтартĕ-ши?! – теççĕ кӳршĕсем Сухвие час-часах.

– Ватлăхра хама пăхма турă пачĕ пулинех, пĕтĕм шанчăкăм унра, – сăпайлăн калаçать хĕрарăм вĕсемпе. Хĕрĕпе Ангелинăпа кăмăллă пулин те нихăçан мухтанмасть. – Шкулта тăрăшуллă, çын çинче хисеплĕ, сывлăхлă çитĕнтĕрччĕ, – шухăшлать тĕпренчĕкĕ пирки.

Хĕр ача, пĕчĕк чухнех вĕрентекенре тăрăшас ĕмĕтпе çунатланнăскер, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче /халĕ университет/ экзаменсене ăнăçлă тытрĕ, анчах кирлĕ чухлĕ балл пухаймарĕ. Пур пĕр хуçăлмарĕ, тепĕр çул ăнăçу пуласса çирĕп шанса Чапаев ячĕллĕ заводра ĕçлеме пуçларĕ. Общежитире пушă вăхăтра алăран кĕнеке ямарĕ, канмалли кунсенче тăван яла васкарĕ.

Пĕр-пĕринсĕр тунсăхланă амăшĕпе хĕрĕ ăшшăн калаçса чунĕсене уçаççĕ. Кил хушшинче тĕрлĕ ĕç пурнăçлама та ĕлкĕрет вашават Ангелина... Сыв пуллашу вара – иккĕшĕншĕн те чи йывăр самант.

Хĕрне Сухви аппа кашнинчех уй хапхи тĕлне çити ăсатать, инçетри мĕкĕлтетӳ курăнми пуличченех куççуль витĕр тинкерсе алă сулать.

...Вăхăт сисĕнмесĕр иртрĕ. Малтанах çамрăксемпе питех хутшăнман Ангелина, юлашки вăхăтра тус-тантăшĕпе кинона, Атăл хĕррине çӳрерĕ. Пĕррехинче хăйне пĕр çамрăк сăнанине сисрĕ вăл. Паллашрĕç. Каччă Чĕмпĕртен килнĕ иккен. Гера ятлă, ĕç хыççăн аэроклуба çӳрет. Вĕçĕхĕррисĕр тӳпе пĕчĕклех илĕртнĕ ăна, летчик тивĕçĕсене пурнăçлас шухăш канăç паман. Çитĕнсен вĕри чунлă йĕкĕт çар институчĕ пирки хыпса çуннă.

Хĕрпе каччă хушшинчи туслăх çирĕпленсех пычĕ. Пĕр ĕмĕттĕллевлĕскерсем ĕç хыççăн часчасах библиотекăна васкарĕç, кайран алла-аллăн çавтăнса çӳресе шуçăмччен уйрăлаймарĕç. Чĕрисенче çуркунне вăраннине сисрĕç-ши?

Экзаменсен вăхăчĕ те çывхарчĕ. Канăççăр чунсене ку хутĕнче савăнăç парнелерĕ вăл. Ача чухнехи ĕмĕчĕсем пурнăçланчĕç çамрăксен. Гера Иркутскри çар институтне вĕренме кĕчĕ.

Уйрăлу йывăр пулин те пинпин çухрăмлă инçе çул та хăрушлăх мар студентпа курсантшăн. Шанчĕç, кĕтрĕç вĕсем пĕр-пĕрне. Тунсăхларĕç. Çыру хыççăн çыру шăрçаларĕç. Нимĕнле чăрмава пăхмасăр савнийĕ патне Гера темиçе те вĕçтерсе çитрĕ. Нихăçан асран тухмĕç асамлă çав кунсем.

Çапла пилĕк çул иртрĕ. Институт хыççăн Ангелина Шупашкарти пĕр шкулта ĕçлеме пуçларĕ. Геронтий Казахстанра службăна тăсрĕ.

Юлашки вăхăтра амăшĕ самаях хавшанăран Ангелина час-часах яла çӳрерĕ. Килтен кайнă чухне уй хапхи патне пĕччен утни чĕрине кашнинчех пăчăртарĕ унăнне. "Сансăр пуçне кам пăхĕччĕ-ши мана, чирлĕскере? Пиччӳсем инçе, сайра килеççĕ. Телейлĕ пул, ачам", – хăлхаран каймарĕç амăшĕн сăмахĕсем.

Гера отпуска килни вăй-хăват хушрĕ, çунатлантарчĕ.

– Ангелина, эпĕ сансăр пурăнаймастăп. Атя, пĕрле кайăпăр. Унта ачасене вĕрентĕн. Çемье çавăрăпăр. Хваттер парĕç.

Ку сăмахсене пачах кĕтменччĕ хĕр. Нимĕн калама аптранипе шак хытрĕ. "Епле-ха... Казахстана? Анне вара? – явăнчĕ те явăнчĕ шухăш. – Савнине те ăнланмалла. Тĕрĕс, пĕрле пулнинчен пахи çук, анчах..."

– Çук, пыраймастăп, – чĕтревлĕн те шăппăн илтĕнчĕç сăмахсем. Тупăран кĕрĕслеттернĕнех туйăнчĕç офицершăн вĕсем. Ӳкĕтлесен те пĕрле кайма килĕшмерĕ савни. Юлашки тĕл пулăва туйса, урăх никама та юратмасса ăнланса куççульпе йĕчĕ вăл. Амăшне хăварсан хăйне нихăçан та каçармĕ Ангелина, пурнăç тăршшĕпе ӳкĕнĕ.

– Мĕн илтетĕп, чунăм? Ангелина, сана çеç юратнă эпĕ, юрататăп та. Эсĕ вара юратман, улталанă мана, – каччă куçĕнчи ачашлăхпа ăшăлăх тăруках çухалчĕç.

Уйрăлас умĕн чĕнмесĕр, хурлăхлăн пăчăртанчĕç савнисем пĕр-пĕрин çумне. Каччă хĕре юлашки хут чуп турĕ.

– Яланах кĕтетĕп сана, пĕр сана, пирĕштийĕм. Шухăшласа пăхсам. Аннӳне пĕрле илсе кайăпăр, – шанчăка çухатмасăр калаçрĕ офицер.

Автобус тапранчĕ. Хĕр юлашки хут алă сулса ăсатрĕ тусне, анчах куççуль витĕр нимĕн те курмарĕ. Вĕри тумламсем пит çăмартине пĕçертсе юхрĕç те юхрĕç.

Никам çине пăхмасăр утрĕ Ангелина. Савнипе тĕл пулнă, çавтăнса çӳресе чуна уçнă вырăнсем... "Телейĕм çухалчĕ, ĕмĕтĕм сӳнчĕ, пурнăçăм кисренчĕ. Мĕн пурăнни малашне? Анчах... анне! Хаклăран та хаклă анне пур манăн!" – вăйсăррăн тайăнчĕ хурăн çине хĕр.

Гера çырăвĕсем сиплĕ эмел пекех пулчĕç уншăн. Юратнă ĕç, ачасемпе хавасланни йывăрлăха пусарса умри тĕксĕмлĕхе сирчĕç, чуна ăшăтрĕç. Лайăххине шанса пурăнчĕ хĕр. Анчах... кăштахран çыру килме пăрахрĕ. Манăçми Гера хĕр чĕринчен тухма пĕлмерĕ, урăххи те кĕреймерĕ унта. Хăйпе çӳрес текенсене Ангелина тӳрех пĕрремĕш юратăвĕпе танлаштарса хакларĕ: "Гера хăйне апла тытмĕччĕ", "Унашкал кăнттам калаçмĕччĕ", – шухăшларĕ час-часах вĕсем пирки.

...Вунă çултан Ангелина Маркелпа çемье çавăрчĕ. Хĕр ача çуралчĕ. Анчах савăнăç нумая пымарĕ çав. Ĕçке ярăннă арçынна ĕçрен хăтарчĕç. Тавлашу, харкашу çине-çинех кисретрĕ чунсене. Мăшăрĕ çине алă çĕклеме те именмерĕ намăса çухатнă упăшка. Уйрăлма тиврĕ хĕрарăмăн. Хĕр пĕрчине пĕчченех ӳстерчĕ вăл.

Амăшне шалкăм çапсан Ангелинăн пурнăçĕ пушшех йывăрланчĕ. "Ачусенчен пархатар пултăр, хĕрĕм, сана та çапла пăхчăр пепкӳсем. Йывăрлăхсемшĕн каçарсам мана, тĕпренчĕкĕм. Пил сана манран", – тесе аллине кăкăр çине хучĕ, унтан шăпланчĕ. Ĕмĕрлĕхех. "Телейсĕр мар эпĕ. Таса юратăва туйнă. Аннене тивĕçлипе, чыслăн пăхнă. Хĕрĕме çиттĕрччĕ унăн пилĕ. Анчах Гера... Телейлĕ-ши эсĕ, чунăм? Каçарсам мана, юратăвăм", – куç илмерĕ хĕрарăм сăн ӳкерчĕкри ăшă кулăллă çамрăк офицер çинчен.

**Альбина ВАСИЛЬЕВА.**

– Тухтăр, эпĕ сывалăп-и?
– Хама та кăсăклă пулса кайрĕ-ха...

* * *

Хĕрарăм юлташне каласа кăтартать:
– Манăн, ахăртнех, ватлăх çулсенче гипноз ăсталăхĕ уçăлчĕ: троллейбусра е автобусра пĕр-пĕр çамрăк çине пăхатăп кăна – вăл тӳрех сывăрса каять...

* * *

Хĕрарăм килне мĕн чухлĕ арçын илсе килмен, вĕсене шкапа, кравать айне е балкон çине мĕн чухлĕ пытарман-тăр... Усси пулман – упăшки командировкăран пур пĕр таврăнман...

* * *

– Пирĕн ывăл каллех ман енчĕкрен укçа ыйтмасăрах илнĕ, – мăкăртатать арçын.
– Мĕншĕн тӳрех ăна айăплатăн? – ывăлĕн хутне кĕресшĕн хĕрарăм. – Тен, эпĕ илнĕ ăна?
– Пулма пултараймасть – енчĕкрен пĕтĕм укçана илмен.

* * *

Урамри сĕмлĕхре пĕрне тытса чараççĕ.
– Туртмалли пур-и?
– Хам туртманнине эпĕ сире виçĕ кун каяллах ăнлантарнăччĕ. Çитмерĕ-им? Хушма пултаратăп.
– Каçарăр... куç шыçнă та... паллаймарăм... пуятăр ахăртнех...

* * *

Олигарх ылтăн пулă тытнă:
– Темĕнле начаркка эсĕ... Шыва каялла ярам-ха сана.
– Виçĕ ĕмĕт вара?
Олигарх:
– Кала эппин...

* * *

– Манăн арăм – çав тери ăслă хĕрарăм. Вăрçăнса калаçма пăрахсан та ман валли каçхи апат хатĕрлесе лартать. Борщ, пĕлĕм пĕçерет, компот вĕретет. Анчах... йăлтах пĕр турилккене тултарать, – каласа кăтартать арçын хăйĕн юлташне.

* * *

– Мана 99 пироженăй парăр-ха.
– Чиперккеçĕм, 100 илесчĕ сирĕн...
– Выçса çитнĕ тетĕр-и? Эпĕ ун чухлĕ çисе яраймăп.

* * *

– Мĕншĕн кая юлса килтĕр?
– Килтен кая юлса тухрăм.
– Маларах тухма май пулман-и?
– Маларах тухма кая юлнăччĕ ĕнтĕ.

* * *

"О! Ку çавă-çке!" – Третьяковкăра уйрăмах тăтăш калакан сăмахсем.

* * *

– Сывлăх сунатăп, сире федерацин хăрушсăрлăх службинчен шăнкăравлаççĕ.
– Ăнланса илтĕм.
– Ăçтан пĕлтĕр?
– Сӳнтернĕ телефон урлă шыраса тупрăр та мана. Эпĕ ăна çаплипех çутман-ха.

* * *

Терапевт патне черетсĕр кĕрекеннисен травматолог патне черет йышăнма тивет теççĕ.

* * *

– Вăл ĕçсе ӳсĕрĕлнине ăçтан пĕлтĕн?
– Ман пата СМС килчĕ. "Хăвăртрах шăнкăравла! Эпĕ телефон çухатрăм!" – çырнăччĕ вăл.

* * *

Икĕ çамрăк уçăлма тухнă.
– Кур-ха, пĕр чиперкке ман çине пăхса кулчĕ.
– Тупнă савăнмалли... Сана пĕрремĕш хут курсан эпĕ эрне кулма чарăнаймарăм.

**И-ХИ-ХИК**

* * *

– Эх, чун ыратать!
– Сипленесчĕ сан...
– Ăхă, сипленнĕ хыççăн пĕвер ыратма пуçлать.

* * *

– Эсĕ качча тухнă-и?
– Паллах.
– Вара мĕнле пек?
– Ачалăхри пекех: çĕрлеччен ан çӳре, ют арçынсемпе ан калаç...

* * *

– Манăн сывлăш пӳлĕнет, – ăнлантарать больницăна пынă кинемей.
Шурă халатли унăн сывлăхне тĕрĕслет – йăлтах йĕркеллĕ. Кинемей хăш вăхăтра хăйне япăх туйнипе кăсăкланать вăл.
– Ватăлатăп пулмалла – автобуса аран хăваласа çитекен пултăм. Кутамкка çакса чупнă чухне темшĕн сывлăш пӳлĕнме пуçларĕ, – уçăмлатать хĕрарăм.

* * *

Сарă çӳçлĕ икĕ хĕр зоопарка кайнă. Пĕри упăте читлĕхĕ патĕнчен ниçта та каясшăн мар.
– Эс мĕн, вырăнтан та хускалмастăн?
– Упăте çынна çаврăннине курас килет.
– Сана çав таранччен айван тесе шухăшламан. Санăн çак вырăнта пĕр çул тăрас пулать.

* * *

– Унта пĕр арçын акăш-макăш калаçать, уçă сывлăша тухасшăн, – тет пилот патне чупса пынă стюардесса.
– Алли-ури хуçăкки-и?
– Ăхă.
– Ăна никам та тытса чараймĕ. Вăл кашнинчех çакăнта тухса юлать.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

**САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"**

**УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!**
**Санаторий "Надежда" желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на**
**ОСЕННИЕ СКИДКИ.**
**Только с 1 сентября по 31 октября 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки – 10 дней:**
**"Стандарт" – 18000 руб.,**
**"Пенсионер" – 16500 руб.**
**К ВАШИМ УСЛУГАМ:** ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
**Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.**
**Спешите, количество мест ограничено!**
Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

### П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**
**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.
**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.
**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.
**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.
**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.
**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.
**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, **metalservis21.ru**
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.
**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.
**28.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**
**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.
**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.
**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**
**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.
**55.**Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.
**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.
**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.
**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.
**134.Кирпич** любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипулом. Т. 89033587353.
**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.
**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.
**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.
**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.
**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.
**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.
**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого. Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.
**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.
**587.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. **Скидки.** Т.8-927-667-62-02
**620.Комнату** 15 кв.м. в с. Шемурша, ул. Космовского, д. 28. Цена договорная. **Т. 8-927-841-26-96.**

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.
**115.Наркология. Трезвая жизнь. Т. 8-902-663-20-80.** Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*
**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.
**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.
**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.
**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.
**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### СУТАТĂП

**580.ÇУРТ** /газ, шыв пур/. **Элĕк р-нĕ, Вылпасар.** Т. 8-927-857-23-54.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редакторшăн – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7870. Заказ 3452.